1938
ФЕВРАЉ
3
КĔÇНЕРНИКУН
27 (4840)-мĕш №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНĔ

20-мĕш çул тухат ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

ХĔРЛĔ ÇАРПА ТИНĔС ÇАР ФЛОЧĔ 20 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ УЙАВА ХАТĔРЛЕНЕР

Февралĕн 23-мĕшĕнче пĕтĕм Совет çĕршывĕ рабочисемпе хресченсен мухтавлă Хĕрлĕ Çарĕ тата мухтавлă Хĕрлĕ Флот 20 çул тултарнине уйавлат.

„Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот—вăл хĕçпăшаллă халăх. Вĕсен паттăр историйĕ—рабочисемпе хресченсен государстви урăхçĕршывсене пăхăнса тăмала мар ирĕклĕхшĕн кĕрешнин историйĕ, халăх хăйĕн телейĕшĕн, социалисăмшăн кĕрешнин историйĕ" („Правда").

Граждăн вăрçи çулĕсенче шурăгвардейецсем йутçĕршыв интервенчĕсемпе пĕрле Совет Республики çине пур йенчен те тапăнса пынă. Çак вăхăтра пирĕн Хĕрлĕ Çар—совет халăхĕн çарĕ темĕн пек пысăк йăвăрлăхсене çĕнтерсе тăшмансене çĕмĕрсе тăкрĕ. Çак мухтавлă çара Ленин—Сталин партийĕ тунă, ăна революцилĕ идейăпа хĕçпăшаллантарнă, ăна пĕтĕм халăх йуратнă, халĕ те вĕçĕмсĕр йуратат.

Шурă генералсем: Йуденич, Деникин, Колчак тата ытти сволочсем помещиксемпе капиталиссен сăнчăрне çĕç мар, çавăн пекех йутçĕршыв капиталĕн сăнчăрне те илсе килессине пĕлнĕ ĕçсынисем.

Партипе совет влаçĕ, Ленин тата Сталин хамăрăн Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота хăватлă, тĕреклĕ тăвассишĕн нумай тăрăшнă, тăрăшаççĕ те. Çак тăрăшни ахаљ пулмарĕ, халĕ пирĕн тăшман тапăннине çĕмĕрсе тăкма хăватлă Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот пур. Пирĕн социалисăмла промышленнăç Хĕрлĕ Çара кирлĕ таран чи паха, чи çирĕп хĕçпăшал пама пултарат.

Пирĕн Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ Флота пур майсемпе те çирĕплетсе, тĕреклетсе пымала. Çакна епĕр капиталисăмла йĕри-тавралăх пуррине, капиталисăмла çĕршывсем, чи малтан фашисла çĕршывсем пирĕн çине вăрçăпа тухма урса кайсах хатĕрленнине асра тытса тăватпăр. Фашисăмăн агенчĕсем, троцкисла-бухаринла шпионсем Хĕрлĕ Çарăн хăватне пĕтересшĕн, ăна тăшмана паранмала тăвасшăн пулнă. Епĕр çак тăшмансене, фашисăмăн агенчĕсене тупса пĕтертĕмĕр.

Совет халăхĕ хăйĕн Хĕрлĕ Çарĕпе, Хĕрлĕ Флочĕпе тивĕçлипе мухтанат. Социалисăмла хăватлă державăн хĕçпăшаллă вăйĕ чаплă љотчиксенчен, чаплă танкиссенчен, чаплă артиллериссенчен, мухтавлă кавалериссенчен, паттăр пехотинцăсенчен, мухтавлă морйаксенчен, пограничниксенчен тăрат.

Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флотăн тылĕ—халăх çирĕплĕхĕ. Вăл халăх Ленин—Сталин парти тавра тачă пĕрлешсе тăрат. Нумай мĕлйунлă совет халăхĕ хăйĕн телейлĕ те савăнăçлă пурнăçне хÿтлеме, çав тери илемлĕ çĕршыва хÿтлеме йалан хатĕр.

Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот уйавĕ çывхарса çитет. Çак чаплă уйава совет халăхĕ пур ĕçре те пысăк çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илет. „Парти организацисен пысăк обйазанниçĕ—Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот 20 çул тултарнине совет патриочĕсен праçникĕ пек кĕтсе илме пĕтĕм халăх çĕкленÿне йертсе пырасси пулат" („Правда").

Граждăн вăрçи историйĕн примерĕсем тăрăх массăна вĕрентмеле, пирĕн аттесемпе пиччесем граждăн вăрçинче тунă паттăр ĕçсем çинчен çамрăксене каласа памала. Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота шефа илнĕ организацисен ĕçне халăха çар ĕçне пĕлекен тăвассипе çыхăнтармала, хамăрăн Хĕрлĕ Çарпа халăха тата тачăрах çыхăнтармала. Красноармейец, краснофлотец—рабочин, колхозникăн, совет интеллигенцин тăван ывăлĕ!

Пирĕн совет правителстви тинĕс-çар флотне малашне тĕреклетесси çине пите пысăк тимлĕх хурат. Çак вăйлă та хăватлă флот тăшмана хăйĕн территорийĕнчи шывĕ çинче çапса аркатакан пулмала!

Пичетĕн, Осоавиахимăн, искусствă, киво работникĕсен—пурин те Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ флот 20 çул тултарнине уйавласа иртерме тимлĕн хатĕрленмеле. Халăх Хĕрлĕ Çарăн тĕлĕнмеле ĕçĕсем çинчен пĕлесшĕн, пирĕн вĕсем çинчен халăха тĕплĕн каласа, ăнлантарса памала. Клубсен, хĕрлĕ кĕтессен, вулав çурчĕсен, театрсен халĕ хĕрсех Хĕрлĕ Çар уйавне хатĕрленмеле. Пропагандиссемпе агитаторсен пирĕн Хĕрлĕ Çарăн, унăн командирĕсемпе политработникĕсен, Совет Союзĕн маршалĕсен: Ворошилов, Буденный Йегоров, Блюхĕр йулташсен паттăрла ĕçĕсем çинчен каласа памала. Ленин—Сталин партийĕ Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ Флота çирĕплетесшĕн мĕнле тăрăшнине пĕтĕм халăх пĕлсе тăмала. Çавăнпа та халĕ агитаципе пропагандă ĕçĕ çак историлĕ уйава хатĕрленес йеппе пулса пымала. Партипе комсомол, профсоюз тата ытти общѣствалă организацисен уйава хатĕрленес ĕçе йертсе пымала. Уйава хатĕрленнĕ май Осоавиахим организацисен ĕçĕсене, чи малтан пуçламĕш организацисен ĕçĕсене нихăçанхинчен те ытла вăйлатмала.

Ленинпа Сталин совет çĕршывĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарĕпе Хĕрлĕ Флотне турĕç, вĕсене çирĕплетрĕç. Пирĕн çак чаплă уйава тивĕçлипе хатĕрленсе иртермеле.

Колхозсен уйăрăлман фондне 1.696 мĕлйун тенкĕ хывнă

Колхозсен уйăрăлман фончĕ ÿссе пыни—колхозсем организаципе хуçалăх йенĕпе çирĕпленсе пынине, колхозниксен пуйан пурнăçĕ ÿссе пынине кăтартса тăрат.

1937 çулта Союзри çĕр мамăкĕ акса тăвакан колхозсем уйăрăлман фонда чи нумайрах хывнă. Узбек, Туркмен, Таджик, Киргиз тата Азербайджан республикисенчи колхозсем счетсем çине 415,4 мĕлйун тенкĕ—1936 çулхинчен 49,8 мĕлйун тенкĕ нумайрах хывнă.

Сахăр кăшманĕ акса тăвакан выранĕсенчи — Винница, Каменец-Подольск тата ытти облаçсенчи колхозсем те уйăрăлман фонда 1936 çулхинчен 66,4 мĕлйун тенкĕ нумайрах хывнă. Вĕсем банкри счетсем çине 242,5 мĕлйун тенкĕ хунă.

Ростов, Днепропетровск, Одесса, Николайевск, Донецк облаçсенчи, Краснодар крайĕнчи, Кабардино-Балкар, Çурçĕр-Осетин, Чечено-Ингуш, Крым тата Молдаван республикисенчи колхозсем банка уйăрăлман фонд счечĕсем çине 320,3 мĕлйун тенкĕ хывнă. Ку вăл—1936 çулхинчен 54,1 мĕлйун тенкĕ нумайрах. Йĕтĕн акса тăвакан районсенчи колхозсен те уйăрăлман фончĕсем чылай ÿснĕ.

Совет Союзĕнчи колхозсем кăçалхи çул уйăрăлман фонда пурĕ 1.695 мĕлйун тенкĕ хывнă. Вăл 1936 çулхинчен 303 мĕлйун тенкĕ, 1935 çулхинчен 1.042 мĕлйун тенкĕ нумайрах пулат.

Колхозсем уйăрăлман фонда уйарнă укçа-тенкĕрен 1937 çулта 1.190 мĕлйун тенкипе уса курнă (строителствă ваљљи т. ыт. те).

(ТАСС).

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ССРСоюз Аслă Совет депутачĕсем: И. В. Сталин, В. М. Молотов тата К. Йе. Ворошилов Узбек ССРеспубликинчен суйланнă ССРСоюз. Аслă Совечĕн депутачĕсем хушшинче 1938 çулхи йанварĕн 20-мĕшĕнче Кремљте.
Б. Фишман фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Карапсене срукчен тийесе йараççĕ

ОДЕССА, 31-I (ТАСС). Хура тинĕс пароходствин тĕп порчĕсем—Одесса, Николайев, Херсон, Новороссийск тата ыттисем те — стахановла ĕçленипе, 1937 çулта йутçĕршыв карапĕсене срукченех тийесе йанишĕн 15 пин кĕренке стерлинг укçан преми илнĕ.

Киргизири колхозсем çĕрмамăкĕ хатĕрлес плана 120 процент тултарнă

ФРУНЗЕ, 1—II. (ТАСС). Киргизири колхозсем çĕрмамăкĕ хатĕрлес плана 120 процент тултарнă. Промышленнăç çĕрмамăкне 1936 çулхинчен 13 пин тоннă ытларах илнĕ. Киргизи ССРеспубликĕнче çĕрмамăкне вăтамăн шутласан гектартан 14,23 центнер туса илнĕ. Киргизири çĕрмамăкĕ акса тăвакан колхозсем иртнĕ çулта 124 мĕлйун тенкĕ тупăш илнĕ. Мĕлйуншер пин тенкĕ тытакан 50 колхозран—24-шĕ çĕрмамăкĕ акса тăвакан колхозсем.

Çĕрмамăкĕ тăратмалисемпе контрактаци планне ирттерсе тултарнăшăн Джалал-Абад районĕнчи колхозсем 2 мĕлйун та 900 пин тенкĕ преми илнĕ.

Папанинăн куçса çÿрекен пăр çинчи станцинче

Çурçĕр çулĕсен тĕп тытăмĕ куçса çÿрекен пăр çинчи станци начаљникĕнчен, Папанин йулташран çакăн пек телеграммă илнĕ:

„Ултă кун хушши вăйлă çилтăвал пулнă хыççăн февралĕн 1-мĕшĕнче ирхине 8 сехетре станцă районĕнчи пăр уйĕ çурăлса, çур километртан пуçласа пилĕк километр таран уйăрăлса кайрĕ. Халĕ епĕр тăршшĕ 300 метр, сарлакăшĕ 200 метр пăр татăкĕ çинче, Апат-çимĕç хунă икĕ выран тата пит кирлех мар техникăла хатĕрсене хунă выран епĕр йулнă пăр татăкĕнчен уйăрăлса кайнă. Çунтармали йапаласем хунă хуçалăх складĕнчен хаклисене пĕтĕмпех çăлса хăвартăмăр. Пурăнмали палаткă айĕнче пăр çурăлма пуçлани палăрчĕ. Йуртан тунă пÿрте куçатпăр. Координатсене кайарахпа пайан пĕлтеретĕп; радио тăрăх çыхăну татăлсан ан пăшăрханăр. Папанин".

Февралĕн 1 мĕшĕнче ирхине Папанин йулташ хăйĕн координачĕсене пĕлтернĕ: çурçĕр широтин 74 градус та 16 минучĕ тата хĕвелнăç долготин 16 градус та 24 минучĕ.

Çурçĕр çулĕсен тĕп тытăмĕнче пире çапла пĕлтерчĕç: йулашки вăхăтра Гренланди тинĕсĕнче вăйлă циклон пулнă. Çурçĕр-хĕвелтухăç йенчен вăйлă çил вĕрнипе пăрсем уйăрăлса кайнă, кăнтăрала куçса пыракан пăр талкишĕ чылай аслăланнă. Куçса çÿрекен станци вырнаçнă пăр уйĕ те çав çиле пула çурăлса кайнă. Пăр çурăлни Папанин йулташăн станцишĕн, унăн малалахи ĕçĕшĕн тÿррĕнех хăрушлăх кÿмест-ха. Анчах çав телеграммăна илнĕ май Папанин ушкăнне пăр çинчен илсе тухассине васкатмала тунă. Февралĕн 2-мĕшĕнче експедици начаљникĕ О. Й. Шмидт Мурманска тухса кайнă. „Таймыр" ледокол çине самолљотсем тийенĕ. Вăл тинĕсе тухса кайма хатĕр тăрат.

Станци вырнаçнă пăр уйăрăлса кайни Папанин ушкăнне пăр çинчен илсе тухас ĕçе йăвăрлатат, мĕншĕн тесен станци йулнă пăр татăкĕ самолљотсене анса ларма çителĕклĕ мар. Папанин ушкăнне пăр çинчен мĕнле илсе тухасси малашнехи лару-тăруран килет. Пăрсем сайралнипех тăрсан, „Таймыр" ледокол Папанин станци патнех пыма пултарат. Тепĕр майлă пулса тăрсан, çил хăш йенчен вĕрни улшăннипе пăрсем пĕр çĕре пухăнсан, вара Папанин ушкăнĕнчи тăвата патăр çывăхра пысăкрах пăр уйĕ тупаççĕ, çав пăр çине самолљотсем анса лараççĕ. Самолљотсем хăйсемех Папанин лагерĕнчен инçетре мар анса ларма йурăхлă пăр тупни те пулма пултарат. Ун чухне самолљотсем çинчи йулташсем Папанин ушкăнĕ патне резинă лодкăсемпе кайаççĕ. Резинă лодкăсем Папанин йулташăн пур, самолљотсем çинче те пулаççĕ.

Куçса çÿрекен пăр çинчи станцири йулташсем пысăк опытлă, тăвата герой пăр çинче малала пурăнма чи лайăхрах выран суйласа илĕç. Пурăнма урăх çĕре куçнă чухне радиостанцине те куçармала килсен, радио тăрăх çыхăнса тăрасси вăхăтлăха татăлни пулма пултарат.

(ТАСС).

ЙАЛСОВЕЧĔСЕНЧИ УЙ-ХИР ĔÇ ÇЕКЦИСЕН ĔÇĔСЕМ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ йышăннă постановлени

Йалсовечĕсен уй-хир ĕç çекцисен ĕçĕсем çинчен Аччакассипе Ољтикасси йалсовечĕсен уй-хир ĕç çекцисен руководителĕсен—Йазыковпа Йаковлев йулташсен, Аччакасси тата Ољтикасси йалсовет председателĕсен—Йаковлевпа Порфирйев йулташсен, Канаш тата Шупашкар райĕçтăвкомĕсен председателĕсен—Бугровпа Хабаров йулташсен тата Тĕпĕçтăвком президиумĕн инструкторĕн Алексейев йулташăн доклачĕсене итлене хыççăн, Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Канаш, çавăн пекех тата Шупашкар районĕнчи йалсовечĕсен уй-хир ĕç çекцисем нумайĕшĕ ĕçлеменнине палăртат, вăл çекцисем темиçе уйăх хушшинче пĕр хут та пухăнман тата çекци членĕсене заданисем паман. Ољтикасси йалсоветĕнче (Шупашкар р.) 1934 çултанпа уй-хир ĕç çекцине пĕр çĕнĕ член та йавăçтарман, халљхи вăхăта 9 членран 6 член кăна йулнă. Çак çекци составĕнче колхозницăсем, колхозсенчи депутатсен ушкăнĕсем уйăрса йанă представителсем çук. Аччакасси йалсовечĕн (Канаш районĕ) уй-хир ĕç çекцинче 16 членран пĕри кăна хĕрарăм.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тата райçĕрĕç пайĕсем йертсе пыман пирки уй-хир ĕç çекцисем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнман. Ољтикассинче те, Аччакассинче те партипе правителствă çураки çинчен йышăннă решенисене пурнăçа кĕртес тата вăл решенисене колхозниксемпе йединоличниксене ăнлантарса парас майпа практикла ĕçсем тума палăртса хуман. Çак йалсовечĕсенчи колхозсем хушшинче çуракине хатĕрленсе иртерес тĕлĕшпе социалисăмла ăмăрту договорĕсем туман, вăл ĕçре уй-хир ĕç çекцисем хăйсен тивĕçлĕ выранне йышăнса тăмаççĕ. Шупашкар районĕнчи пĕр уй-хир ĕç çекци те агротехникăла ĕçсен, вăрлăх улăштарассин, вăрлăхсене суртлассин, çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тумали тата ытти ĕçсен планне мĕнле пахалăхпа пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслес тата контроль тăвас ĕçе йĕркелемен.

Районсенче тата республик центрĕнче тухакан хаçатсем лайăх ĕçлекен уй-хир ĕç çекцисен авангардĕн тĕслĕхĕсене кăтăртса пымаççĕ.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ йышăнат:

1. Канаш, Шупашкар тата ытти пур райĕçтăвкомсене те йалсовечĕсен уй-хир ĕç çекцисен ĕçне тивĕçлипе организацилеме, колхозниксемпе йединоличниксене 1938 çулти çуракипе ытти пĕтĕм йалхуçалăх ĕçĕсене большевикла туса иртерме хатĕрлес йенĕпе массăлă ĕçе организацилеме хушас. Çекцисем туса пыракан массăлă ĕç ударлă ĕçлекен колхозниксемпе колхозницасенчен уй-хир ĕç çекцисене çĕнĕ членсем хутшăнтарма пулăшмала.

2. Райçĕрĕçпайĕсен уй-хир ĕç çекцисене вĕсен умĕнче тăракан задачсемпе килĕшÿлĕн, çывăх вăхăта ваљљи хăйсен ĕç планĕсене тума практикăла пулăшу пулмала. Çак ĕçсене тума вĕсен хăйсен работникĕсене выранĕсене йамала, çекцисен руководителĕсене йалхуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх иртерекен канашлусене чĕнмеле.

3. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне уй-хир ĕç çекцисен çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлемели çинчен практикăла кăтартусем хатĕрлесе, вăл кăтартусене васкавлăн выранĕсене йарса пама хушас.

4. Шупашкар районĕнчи Ољтикасси йалсовечĕн, Канаш районĕнчи Аччакасси йалсовечĕн, Чăваш АССР-чи тата ытти йалсовечĕсен уй-хир ĕç çекцисене çуракине хатĕрленес ĕçе хĕрÿлĕн тытăнма тата çак ĕçри лайăх тĕслĕхсемшĕн социалисăмла ăмăртассине сарса йама хушас.

5. Райĕçтăвком председателĕсен, вăл йе тепер йалсоветĕнче пулнă чухне, йалсовет çекцисен ĕçĕпе паллашма тивĕç. Райĕçтăвком аппаратĕнче ĕçлекен кашни работникĕн выранĕсене тухса çÿренĕ чухне çекцисене ĕçе йĕркелесе йама практикăла пулăшу памала. Тĕпĕçтăвком инструкторĕсен районра пулнă чухне йалсовет çекцисен ĕçĕсене тĕрĕслемеле, райĕçтăвкомсемпе йалсовечĕсене йалти советсен çекцисене йертсе пырас ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе практикăла пулăшу памала.

6. Хаçат редакцисене, Тĕпĕçтăвком инструкторĕсене тата райĕçтăвкомсене çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе массăлă ĕçе лайăх организациленĕ, йалта пулса иртекен хуçалăхла-политикла задачсене пурнăçлас тĕлĕшпе пĕтĕм организацилĕ массăлă ĕçе лайăх туса пыракан лайăх çекцисен ĕçĕсене пичетре çутатса пыма хушас.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ
З. Андрейева.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет çекретарĕ
Т. Василйев.

Шупашкар хули,
1938 çулти йанварĕн 5-мĕш.

Хĕрлĕ Çар уйавĕ умĕн

МУСКАВ, 1-II (ТАСС). Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă тĕле Хĕрлĕ Çарăн М. Ф. Фрунзе йачĕпе тăракан Тĕп çуртĕнче йубилейлă выставкăсем иккĕ хатĕрлеççĕ. Кунте красноармейец-художниксен ÿкерчĕкĕсен выставки уçăлат. Вĕсен картинĕсемпе ÿкерчĕкĕсене Мускава Совет Союзĕн пĕтĕм кĕтесĕсенчен илсе пыраççĕ. Ленинград çар округĕнчен, Çурçĕр—Кавказ т. ыт. çар округĕсенчен експонатсем йани çинчен пĕлтерÿсем илнĕ те ĕнтĕ. Греков йачĕпе тăракан изостуди выставкăна лайăх хатĕрленет. Вăл студире хăйсем тĕллĕн вĕренекен художниксем—Сталин йачĕпе тăракан Хĕрлĕ Йалавлă уйрăм кавалери дивизин боецĕсем ĕçлеççĕ.

Йубилей кунĕ тĕлне çавнашкалах тата граждăн вăрçи тапхăрĕнчи плакатсен выставки уçăлат. Выставкăна çĕр плаката йахăн пухаççĕ. Вĕсем хушшинче Моор, Дени, Черемных, Майаковский т. ыт. те ÿкернĕ плакатсем пулаççĕ.

***

МУСКАВ, 1-II (ТАСС). Изогиз Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă тĕле илемлĕ изданисем чылай кăларат. Вĕсен шутĕнче: пролетариатăн паллă полководецĕсен —К. Й. Ворошилов йулташ йертсе пыракан Совет Союзĕн Маршалĕсен портречĕсем, граждăн вăрçи Геройĕсен—Чапайевăн, Щорсăн, Котовскин тата ыттисен портречĕсем, илемлĕ сăрласа тунă тăхăр плакат, стена çумне çыпăçтармалли картинăсем тата открыткăсем пур.

Хĕрлĕ Çар дивизийĕсенчи парти конференцийĕсем

Февралĕн 1-мĕшпе 5-мĕшĕ хушшинче пур çар округĕсенче те дивизисенчи парти конференцийĕсем пулса иртеççĕ.

Ку конференцисем умĕн Хĕрлĕ Çар чаçĕсенчи пуçламĕш парторганизацисен парти пухувĕсем пулса иртеççĕ. Пухусем политикăла пысăк çĕкленÿпе иртеççĕ, вăл ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарти парторганизацисем идейă тĕлĕшĕнчен ÿснине пĕлтерет.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн йанвар уйăхĕнче пулнă Пленумĕ йышăннă решенисене сÿтсе-йавса, Хĕрлĕ Çарти большевиксем ĕçри çитменлĕхсене уçса палăртаççĕ, Тĕп Комитет Пленумĕ йышăннă решенине хăвăрт пурнăçа кĕртмели татăклă майсене йышăнаççĕ. Дивизисенчи парти комиççисен политикăлă-воспитани ĕçĕнчи çитменлĕхсене тата политпайсен йертсе пырас ĕçĕнчи çитменлĕхсене хытă критиклеççĕ.

Пуçламĕш парторганизацисен пухувĕсем дивизири парти конференцине кайма делегатсем суйлаççĕ.

Дивизисенчи парти конференцисем ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн йанварти Пленумĕ „Парти организацисен коммуниссене партирен кăларнă чухнехи йышăшĕсем çинчен, ПСК(б)Партинчен кăларнисен апелляцисем çине формаллă-бÿрократла пăхни çинчен тата çав çитменлĕхсене пĕтермели майсем çинчен" йышăннă постановлени çинчен доклад итлесе сÿтсе-йаваççĕ, дивизири парти комиççи секретарĕсен отчочĕсене итлеççĕ тата вăрттăн сасăласа дивизири парти комиççине суйлаççĕ.

(ТАСС).

Фашиссем Англи карапне путарнă

ПАРИЖ, 1-II(ТАСС). Гавас агенстви пĕлтернĕ тăрăх, республикăн Картахенри тĕп тинĕс бази çапла пĕлтерет: йанварĕн 31-мĕшĕнче, кăнтăрла, пăлхавçăсен шыв айĕнчен çÿрекен кимми тинĕс хĕрринчен 16 милре порт çывăхĕнче тăракан Англин „Эндимион" йатлă суту-илÿ карапĕ çине тапăннă. Çав карап çинче „Испанири ĕçсене хутшăнмала мар" текен контроль комитечĕн агенчĕ пулнă. Пăлхавçăсен шыв айĕнчен çÿрекен кимми тапăннă хыççăн тăвата минутран карап путнă. Караппа пĕрле путнисем хушшинче çав контроль комитечĕн агенчĕ—швед тата Англи çыннисем: карап капитанĕ, унăн пĕр помощникĕ тата темиçе матрос пулнă. Карап çинчи çыннисене хăшне-пĕрне портран хăвăрт пулăшу парса çăлса хăварнă.

Гитлер йыттисене тытнă

ВЕНА, 31-I. (ТАСС). Полици Германин икĕ графне—Дурски хушаматлă иччĕшпе шăллĕне тата Тимен хушаматлă Германи баронне арĕсленĕ. Вĕсем Австрире гитлерла пăлхав хатĕрлекенсене йертсе [illegible] рекен хыпарсем тăрăх, полици гитлеровецсен Венăри бÿрогĕнче картотекăпа спискăсене конфискациленĕ. Вăл картотекăпа спискăсем гитлеровецсем Австри влаçне хĕçпăшалпа вăйĕпе сирпĕнтерме хатĕрленнине кăтартса параççĕ.

Лашасене çуракине хатĕрлеме халех тытăнмала

Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре акмали вăрлăха лайăх тасатса хунипе тата йалхуçалăх машинисене вăхăтра хатĕрлесе лартнипе пĕрле ĕç лашисене çуракине мăнтăрлă кăларасси пит те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ĕç лашисене лайăх пăхса усрани çуракине кĕске срукра тата лайăх пахалăхпа иртерме май парать. Апла пулин те хăшпĕр колхозсенче çакна ăнланса илеймен-ха. Чылай çĕрте коњухсем лашасене кирлĕ пек пăхмаççĕ, вăхăтра шăвармаççĕ. Коњухсем хушшинче социалисăмла ăмăртса ĕçленине сахал çĕрте тĕл пулма пулать.

Шĕмшеш йалĕнчи (Елĕк р.) Молотов йачĕпе тăракан колхозри коњухсем лашасене тăрантарма пана сĕлĕне вăрттăн сутса пураççĕ,—тесе пĕлтерет Коннов йулташ. Çавăнпа та лашасене час-часах кунĕ-кунĕпе выçă тăратаççĕ. Кунта лашасене хырчăкласси çинчен асăнмаççĕ те. Лашасене начарлатса йачĕç. Çак çитменлĕхсене правлени членĕсем лайăх пĕлсе тăраççĕ пулин те, нимĕн те шарламаççĕ.

Йефимов йалкор çырса пĕлтернĕ тăрăх, Хурăн Кăкшăмри (Вăрнар р.) „Красноармейец" колхозра та лашасене калама çук начар пăхаççĕ. Вăхăтра апат памаççĕ, шăвармаççĕ. Нумай чухне шывсăр аптранипе лашасем йур кышласа çӳренине курма пулать. Пĕтĕм кĕсресене йăвăр ĕçсене кӳлеççĕ. Çавăнпа та „Љвица" йатлă кĕсре хăм пăрахнă. „Самољот" йатлă лашана пăхма пĕлменнипе начарлатса йарса сутнă. Кунта лашасем миçе çухрăма кайса килнине шута илмеççĕ. Лайăх чупакан лашасене кашни куллене кӳлеççĕ.

Бригадирсемпе правлени членĕсем коњухсен ĕçне тĕрĕслемеççĕ. Кӳлмељи таврашсем çитмен пирки тĕрлĕрен хăмăт-ĕнерчĕкпе кӳлсе лашасене пăсса пĕтернĕ.

Йетĕрне районĕнчи Алексейевкăри „Хĕрлĕ Çăлтăр" колхоз коњухĕсем лашасене виçшер кун апат памасăр, шăвармасăр тăратни пулнă. Уйрăмăнах Китайевпа Григорйев коњухсем начар ĕçлеççĕ.

Платкари „Хĕрлĕ йалав" колхозра (Шупашкар р.) лашасем çине тӳнтерле пăхаççĕ. Пĕтĕм кĕсресене йăвăр ĕçе кӳлеççĕ. Нумайах пулмасть, „Сивка" йатлă кĕсрене хăм пăрахтарнă.

Кĕсресене хăм пăрахтарни çинчен правленине çийĕнчех пĕлтернĕ. Анчах правленинче ларакансем: кĕсресем хăм парахни вăл—„вопрос второстепеннăй" тесе, нимĕн те туман.

Çак асăннă фактсем хăшпĕр колхозсенче лашасем çине кирлĕ пек пăхманнине çирĕплетсе параççĕ.

Колхозсенче лаша вăйĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать, ăна пурин те асра тытмала. Лашасене куç шăршине сыхланă пек сыхламала.

М. Михейев.

„АТĂЛ" КОЛХОЗ ТĔРЕКЛЕНЕТ

ТРАК. Пĕр 25 çул кайарах Йанкас йалĕнче икĕ пĕчĕк чӳречелĕ хурал пӳрчĕ пурччĕ. Йалти мĕн пур вата, çамрăк çак хура пӳрте пуçтаранса картла выљаса вăхăчĕсене иртернĕ. Йалти 95 хуçалăхран 12 хуçалăх çеç шурă пӳртсенче пуранна, ыттисем вара хăйсен ĕмĕрĕсене хура пӳртсенчех пурăнса иртернĕ. Йалти çынсем 75 процента йахăн трахом, кĕçĕ чирĕсемпе чирленĕ. Çывăхра бољница пулман. Ун вырăнне Йанкасран пĕр 3 çухрăмра чухăнсен йунне ĕçекен чиркӳ ларнă. Йалĕпе те хутла вĕреннĕ çынсем 4 кăна пулнă. Вĕсем те вулама, çырма çеç пĕлнĕ. Куланай тӳлейменшĕн Йанкас халăхĕ сахал мар нухайкасен айĕнче авкаланнă, куççул йухтарнă.

Колхоза кĕнĕренпе Йанкасри колхозниксен пурнăçĕ йалтах улшăнчĕ. Йалта трахпункт, пуçламĕш, туллимар вăтам шкул пур. Трахом чирĕпе чирленисен шучĕ кунран кун чакса пырать. Кашни колхозникех çĕнĕ пӳртсем, мунчасем лартаççĕ, колхозра ĕçлесе çимелĕх те, выљăх-чĕрлĕх усрамалăх та тырпул, утă-улăм илеççĕ.

Ĕлĕкхи тĕксĕм хура хурал пӳрчĕ вырăнне колхоз 300 çын вырнаçмалăх клуб лартрĕ. Клуба колхозниксем каççеренех пухăнса тĕрлĕрен хаçат-журналсем вулаççĕ, шашкă-шахмăт тата ытти вăйăсене те выљаççĕ.

Аслă шкул пĕтернисем йалта 14 çын, вăтам шкул пĕтернисем 39 çын. Акă ĕлĕк пуйансем патĕнче тарçăра ĕçленĕ Тимофейев, Йаковлев колхозниксем халĕ хулари пек илемлĕ, шурă çуртсем лартрĕç.

— Халĕ епĕр пуйан пурнăçпа пурăнатпăр. Спасибă çакнашкал пуйан та културăлă пурнăç туса панăшăн Сталин йулташа, тет 69 çулхи Йегор Фомич.

Йанкасри „Атăл" колхоз районта лайăх ĕçлекен колхозсен шутĕнче шутланать. Колхоз çуракине хатĕрленес ĕçе те вирлĕн тытăнчĕ. Уйа 750 лав тислĕк, 400 лав йушкăн кăларчĕ. 151 центнер фекали, 15 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 35 центнер кĕл пухса хатĕрлерĕ. 55 гектар çĕр çинче йур тытнă. Вăрлăхлăх тырра 100 процентĕпех суртласа тасатса хунă. Йалхуçалăх машинĕсем те йусавлă. Начартарах лашасене уйрăмăн вăйлă апат çине тăратнă.

Ф. Афанасйев

Колхозсен йышĕ ӳссех пырать

Колхозсем иртнĕ çулта нихăçан пулман вăйлă тырпул туса илчĕç. Халĕ вĕсем пуйан та културлă пурнăçпа пурăнаççĕ. Вĕсем кăçалхи çул татах та вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Çавна кура йединоличниксем колхоза кĕресси те анлăн сарăлса пырать.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Киров йачĕпе тăракан колхоза 2 хуçалăх, „Хĕрлĕ Туканаш"—4 хуçалăх, Енгелс йачĕпе тăракан колхоза 7 хуçалăх, „Хĕрлĕ майак"—7 хуçалăх, Ворошилов йачĕпе тăракан колхоза 4 хуçалăх кĕнĕ.

Çавнашкалах, Елĕк районĕнчи „Красный Октябрь" колхоза 6 хуçалăх 27 йедокпа кĕнĕ. Кун пек тĕслĕхсем ытти районсенче те нумай.

Колхоза çĕнĕрен кĕнĕ колхозниксем бољшевикла çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хастарлăн ĕçлеççĕ.

Фермă ĕçне лайăхлатмалах

Йалхуçалăхĕнче выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйту пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах йалсоветсенчи тата колхозсенчи хăшпĕр руководителсем выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине çийелтен пăхаççĕ.

Туканаш йалĕнчи (Куславкка р.) „Канаш" колхозĕн сысна ферминче сыснасен хисепĕ ӳссе пырас вырăнне сахалланнă çемĕн сахаллаnса пырать. 1935 çулта фермăра 108 пуç сысна пулнă пулсан, 1937 çул петнĕ тĕле 42 пуç çеç йулнă. Урăхла каласан 2,5 хут ытла чакнă. Го ударствă планĕ тăрăх 1938 çул тĕлне фермăри сыснасен шучĕ 180 пуç пулмала. Плана тултарман. Ăста унăн сăлтавĕ тата кам айăплă? Правлени пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ В. Огурцовпа фермă пуçлăхĕ П. Орлов сыснасен йăхне лайăхлататпăр тесе сутса пĕтернĕ те, вĕсен вырăнне ăратлисене илмен. Чирлисене пусса часрах какай тунă. Нумайăшĕ начар пăхнипе вилсе пĕтнĕ. Сысна çӳрисем кăçал та айĕсене улăм сарса паманнипе шăнса вилнисем пулнă. Ку тĕлĕшпе правлени пуçлăхĕ Н. Белов айăплă, мĕншĕн тесен вăл фермă пуçлăхĕ П. Орлов сыснасем айне сарма улăм турттарса кайма лаша ыйтма пырсан, ăна вăрçса кăларса йанă.

М Артемйев.

Гектартан 130 пăт илессишĕн

ЕЛĔК. Йехремкассинчи „Майăн 1-мĕшĕ" колхоз кăçал кашни гектар çинчен 130-шар пăтран кайа мар тĕш тырă туса илме пулса обйазательствă илчĕ, хăй пек ĕçлеме „Турăсăр" колхоза социалисăмла ăмăртăва чĕнчĕ.

„Майăн 1-мĕшĕ" колхоз уйа 1050 лав тислĕк, 351 лав пĕве йушкăнĕ кăларнă, 110 гектар çинче йур тытнă, фосфорит çăнăхĕ 4 тоннă кӳрсе килнĕ.

Йалхуçалăх машинисене те йусаса пĕтернĕ. Çуракинче кӳлмели таврашсене ытлашшипех хатĕрленĕ.

Колхоз çуракинче таса суртлă вăрлăхпа акма пур вăрлăхсене те суртласа çитернĕ.

Пешкин.

Хатĕрлев планне ытлашшипех тултарчĕ

ВĂРНАР. Сталин йачĕпе тăракан колхозри Петров йулташ йертсе пыракан бригадă пур ĕçре те малта пырать. Унăн бригади вăрман ĕçĕнче малта пыр кăннисенчен пĕрийĕ шутланса тăрать. Пĕрремĕш квартăлта бригадăн 400 кубла метр вутă хатĕрлемеле пулнă пулсан, вăл пайанхи куна 450 кубла метр хатĕрлерĕ. Турттарас плана та çак кунсенчех тултараççĕ.

Бригадăри Иван Арсентйев, Герасим Зайцев колхозниксем куллен хи ĕç нормисене 125—150 процент тултарса пыраççĕ.

А. Козлов

Районра социалисăмла ăмăртува пуçарман

СĔНТĔРВĂРРИ. Районра вăйлă тырпулшăн кĕрешесси йапăх пырать. Чылай колхозсенче вăрлăхсене суртлас тата суртлă вăрлăхсене улăштарас, çĕре çемĕçтермели йапаласене пухас ĕçсене тивĕçлипе тытăнман. Аслă Ăстакассинчи „Бољшевик" колхозра трийер пур пулсан та, тырăсене питех те сахал суртланă. Авăн çапмали тата тырă вырмали машинăсем йур айĕнчех лараççĕ. Йалхуçалăх машинисене пĕтĕмпе те 7 плуг çеç йусанă. Бригадирсем хăйсен бригадисенчи сӳресен, плугсен, урапасен шучĕсене тĕплĕн пĕлмеççĕ. Çавăн пекех лаша таврашĕсем те çителĕксĕр. Кунта минераллă çăнăхсене кӳрсе килесси çинчен нимĕн те шарламаççĕ.

Упакассинчи „Трактор" колхозра ти ĕрçĕ çук тесе йалхуçалăх машинисене йусамасăр лартаççĕ, плугсем ăçта май килнĕ унта сапаланса выртаççĕ. Кел, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухма тытăнман. Чермĕшри „Пишчевик" колхозра ку тарана çитсе те клевĕр вăрине тасатса хатĕрлемен, плугсене йусаман, авăн çапмали машинăна çу серсе йĕрлесе лартман. Фекали, кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕке пухас ĕçе йĕркелемен, минераллă çăнăхсене кӳрсе килмен. Кунта лаша таврашĕсене уйрăм колхозниксем патĕнче усраççĕ.

Арзаматоври „Ядро" колхозра плугсене çухатса пĕтернĕ. Нумай пулмасть В. Перлов колхозник кĕраки туна вырăнтан, йур айĕнчен икĕ плуг тупса кĕнĕ. Колхозра вăрлăхсене суртлас тата улăштарас ĕç те вăраххăн пырать.

Районри чылай колхозсенче производствăлă плансем туман. Арзаматоври, Пуснаркассинчи, Упнерти колхозсенче производствă планĕсене тума тытăнман та.

Çуракине хатĕрленес ыйту тавра социалисăмлă ăмăртува çителĕклĕ пуçарман. Хăшпĕр колхозсенче кун çинчен аса та илмен.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕç çакăн пек йапăх пыни райĕçтăвкомран, вăл ку ĕçе çителĕклĕ йертсе пыманнинчен килет. Райçĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ Ериков тата райçĕрĕç пайĕнчи агрономсемпе зоотехниксем вăхăта канцељарисенче ларсах ирттереççĕ. Колхозсене сахал пулăшаççĕ Райçĕрĕç пайĕн колхоз ене йертсе пырассине вайлăлатмала, кайа йулнă ĕçсене кĕске срукрах пĕтерсе вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве организацилемеле.

И. Данилов.

Çĕнĕ вите турĕç

Мăн-Йĕкĕтри (Йетĕрне р.) „Хĕрлĕ Октăбĕр" колхозра 32 лаша вырнаçмалăх çĕнĕ вите туса пĕтерчĕç. Халђ лашасем ăшă та çутă витере тăраççĕ.

Т. Йарандайкин

Çуракине хатĕрленес ĕçре йединоличниксене манмала мар

Хăшпĕр руководителсем 1937 çулхи çитĕнӳсемпе лăпланса ларнă пирки, кăçал чылай колхозсем 1938 çулхи çуракине хатĕрленес ĕçе кайа йулса тытăнчĕç. Çуракине хатĕрленес ĕçе, хĕлле тумали агротехникăла ĕçсене тума тытăнман йе сахал ĕçленĕ колхозсем халђ те пур. Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, колхозсенче çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе çак йулашки уйăхра чылай улшăнусем пулчĕç. Чылай колхозсем вăрлăхсене суртласа хатĕрлесçĕ, çĕре çемçетмели вырăнти йапаласене пухаççĕ, минераллă çăнăхсене илсе хатĕрлеççĕ, машинăсене йусаса хураççĕ.

Чи кайра пыракансем халђ—йединоличниксем. Ишлей районĕнчи Кибечкасси йалсоветне кĕрекен колхозсемпе йединоличниксене илер. Кунта колхозсем те начар ĕçлеççĕ, йединоличниксем вара нимĕн те тумаççĕ. Йединоличниксен вăрлăх пурри-çуккине, камăн мĕн акмалине те пĕлмеççĕ. Вĕсем хушшинче массăлă-ăнлантарулă ĕç çук.

Трак районĕнчи Тĕрер йалсоветне кĕрекен колхозсем 1938 çулхи тырпулшăн вăйлăн кĕрешме тытăннă ĕнтĕ. Йалсоветĕпе 19 хуçалăх йединоличник пур. Вĕсем вара вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе пачах тытăнман. Вăрлăхсене хатĕрлемен, суртламан, çĕре çемçетмели йапаласене пухмаççĕ.

Ытти районсенче те çавăн пекех. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Мăн-Хăмарка йалĕнчи йединоличниксем вăрлăхсене тасатма тытăнман. Клевер вăрри те çук. Кунта колхозра тăманнисем йалĕпе 15 хуçалăх пулин те, вĕсем хушшинче никам та ĕçлемест.

Пирĕн çакна астумала: ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çирĕплетсе панă государствă планĕ тăрăх, йединоличниксем çуракинче акмали лаптăк республикĕпе пурĕ 43 пин гектар шутланать. Ку вăл колхозсем акакан лаптăкĕн ⅛ пайĕ пулать.

Йединоличниксем йулса пыни вĕсем çинчен йалсоветсем манса кайнă пирки, çуракине хатĕрленес ĕçре вĕсене йертсе пыман пирки пулнă. Çавăнпа та йалсоветсен хăйсен ĕçĕнче йединоличниксем çине те çавăрăнса пăхмала, вĕсене колхоза кĕртес тĕлĕшпе ĕçленипе пĕрлех, çуракине хатĕрленес ĕçре те конкретлăн йертсе пымала, кам мĕн тумалине кăтарса пырса ĕç мĕнле пынине йалан тĕрĕслесе тăмала.

Вĕренӳ пахалăхне тата вăйлăнрах ӳстерер

Сĕнтĕрвăрринчи йалхуçалăх техникумĕ Çĕрпӳри йалхуçалăх техникумĕпе ăмăртса ĕçлет. Вĕренӳ пахалăхĕшĕн кĕрешес ĕçе тата ытларах вăйлатса пырас шутла, техникумри преподавателсем тата студентсем пĕр-пĕринпе ăмăрту договорĕсем тунă. Кашни курс малти вырăна тухассишĕн кĕрешет.

Ăмăртса ĕçлени пире вĕренӳ пахалăхне хăпартма пулăшрĕ. Вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕнче пĕтĕм техникумĕпе „отлично" паллă илнисем 13,6 процент, „хорошо"—34,4 проц., „посредственно"—39,9 проц., „плохо"—2,5 процент пулнă пулсан, иккĕмĕш чĕрĕкре отличниксен шучĕ 22,5 процента çити ӳснĕ, „хорошо" паллă илекенсем 45,17 процент, „посредственно—31,11 процент шутланаççĕ", „плохо" паллă илнисен йышĕ 1,15 процента çити чакнă. Ку тĕслĕхсем ăмăрту договорĕнче кăтартнинчен чылай мала иртеççĕ.

Студентсен дисциплини сисĕнмелех çирĕпленчĕ. Вĕренме пĕр сиктермесĕр çӳрекенсем малтанхи чĕрĕкре 96 процент пулнă, иккĕмĕш чĕрĕкре—98 процента çитнĕ.

Вĕренӳре комсомолецсем малта пыраççĕ. Çĕрĕçкелӳ пайĕнче IV курсра вĕренекен Йершов Семен, Тихонов Иван, гидротехникă пайĕнче IV курсра вĕренекен Кузнецов Георгий, III курсра вĕренекен Агапова Зойа, I курсра вĕренекен Драгункин студентсем пур предметсемпе те отлично вĕренеççĕ. Вĕсем пурте комсомолецсем. Кунсăр пуçне, пĕр предметпа „хорошо" ыттисемпе пуринпе те „отлично" паллăсем илсе вĕренекенсем нумай. Пĕрремĕш чĕрĕкре вăтам вĕренсе пынă нумай студентсем иккĕмĕш чĕрĕкре лайăх вĕренсе пыракан пулчĕç.

Техникумра лайăх вĕреннипе пĕрлех, студентсем обшчествăлă пурнăçа та активлăн хутшăнаççĕ. Суйлав кампанинче ĕçлеме студентсенчен йалсене 17 агитатор йанă. Техникум районти Кукашне йалсоветне кĕрекен: Пысăк Маклашкинă, Пĕчĕк Маклашкинă, Кукашне, Пĕччен Хыр, Йуркйевкă йалĕсене шефа илнĕ. Студентсем ку йалсенчи колхозсене пур ĕçре те куллен пулăшса пыраççĕ, йала пырса час-часах спектаклĕсем лартса, докладсем туса параççĕ, кашни колхозрах стена хаçачĕ кăларса тăраççĕ, çуракине хатĕрлеме пулăшаççĕ.

Ăмăртупа ударлă вĕренӳве комсомол организацийĕ пуçарса пырать. Техникумри комсомол йышĕ çемĕн ӳсет. 1937 çулта комсомола 11 студент, кăçал, 1938 çулта, 7 студент кĕнĕ, халĕ тата 9 çын кĕме хатĕрленнĕ. Комсомол организацине вĕренӳри отличниксемпе ударниксем кĕреççĕ. III курсра вĕренекен Петров Аркадий комсомола кĕреччен 12 предметран 11-ĕшпе „отлично", пĕр предметпа „хорошо" паллăсем илсе вĕреннĕ, халђĕ вăл пур предметсемпе те отлично вĕренме сăмах пачĕ.

Студентсен клас тулашĕнчи вăхăтне лайăх йĕркеленĕ. Техникумра пĕтĕмпе 13 кружок ĕçлет. Кунта фото, радио, автотрактор ĕçĕсене вĕренекен кружоксем уйрăмах паларса тăраççĕ.

Уроксем хыççăн куллен политинформацисем пулса иртеççĕ. Çавăн пекех политкружоксен занятисене те студентсем пĕр сиктермесĕр, лайăх хатĕрленсе çӳреççĕ, кашни вĕренекен конспектсем çырса пырать.

Кану вăхăтĕнче вĕренекенсем кĕнеке, хаçат-журналсем вулаççĕ, спорт вăййисем выљаççĕ. Техникумри библиотекăпа ун çумĕнчи вулав пӳлĕмĕ студентсен ыйтăвĕсене çырлахтарсах пыраймасть. Вĕсен ĕçне нумай лайăхлатмала.

Шашкă-шахмăт, доминопа биллиардсемсĕр пуçне, техникум дирекцийĕ студентсене валљи çак кунсенче пианино илчĕ.

Физкултурниксем халĕ Хĕрлĕ Çар 20 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

Çĕрпӳ йалхуçалăх техникумĕпе тунă ăмăрту договорĕ мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине çак кунсенче тĕрĕслесе тухатпăр. Пирĕн ĕмĕт—ăмăртура пур йенĕпе те малти вырăна йышăнасси.

Г. Смирнов.

Улатăрти транспăрт комбиначĕ

Улатăрти транспорт комбинатĕнче вĕренекенсен шучĕ пысăк. Комбинат чукунçул транспортĕнче ĕçлекенсене хатĕрлет. Шкулран машиниссем, паровоз хуçалăхĕнче ĕçлекен техниксем, токарсем, сварщиксем, слесăрсем, тимĕрçсем пулса тухаççĕ.

Комбинат пысăк хуçалăхран тытăнса тăрать. Унта литейнăй, механический, тимĕрç, моделсем тăвакан тата ытти цехсем те пур. Литейнăй цех йалхуçалăх машинĕсем валљи шестерњасем йухтарса хатĕрлет, ытти не те тăвать.

Комбинатра ĕç нормисене 150—200 процент тултаракан рабочисем, вĕренӳ ударникĕсем чылай. Литейнăй цехра ĕçлекен Панов хăйĕн ĕç нормисене куллен 200 процент таран тултарса пырать, унăн браксем çук.

Вĕренӳре Свистунов, Ерилин, Чундеров, Потелников т. ыт. йулташсем малта пыраççĕ, вĕсем обчăлă ĕçре те активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Комбинатра 157 комсомолец. Вĕсенчен чылайĕшĕсем Аслă Совета суйлас ĕçре вирлĕн хутшăнса ĕçлерĕç. Комсомолецсен йышĕ ӳссех пырать. Вĕренӳре малта пыракан 12 студент кăçалхи вĕренӳ çулĕнче комсомола кĕчĕç.

Комбинатăн библиотекă пур. Библиотекăра 28 пин ытла кĕнеке шутланать. Нумайах пулмасть библиотекă валљи çĕнĕрен тата 5000 тенкĕлĕх кĕнекесем илнĕ. Çак çулшăн 4500 тенкĕлĕх тĕрлĕрен хаçат журнал çыраннă.

Оборонă ĕçне вĕренесси те комбинатра аван пырать.

Комбинатра уйăхра икĕ хут „Красные кадры" йатлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Унта студентсен сăввисемпе статйисене, комбинатри çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем çинчен, вĕренӳра тата производствăра малта пыракан йулташсен ĕçĕсене лайăххăн çутатса пыраççĕ. Комбинат çумĕнчех фото, авто, литератуăрă, драмă, хор кружокĕсем те аван ĕçлесе пыраççĕ. Кашни студентах пĕр-пĕр кружок членĕнче тăрать.

Кану кунĕ умĕн клубра кино, спектакљ йе вечĕр пулса иртет.

Техникумри студентсем Мускаври Дзержински йачĕпе тăракан техникумпа ăмăртува тухрĕç. Вĕсем вĕренӳре малта пыма, обчăлă ĕçре лайăх хутшăнса ĕçлеме пулчĕç.

Ант. Иванов.

Автотранспăртра бољшевикла йĕрке тумала

Пирĕн çĕршывра автопарк çулран çулах ӳссе пырать. Иккĕмĕш пйатилеткăра автопарк пĕрремĕш пйатилеткăпа танлаштарсан 8 хут ӳснĕ. Çак ӳсĕм вăл пĕтĕмпех хамăр тăван çĕршыври заводсем кăларнă автомобилсен шучĕпе пулнă.

Чăваш республикĕн автопаркĕ 1938-мĕш çулти йанварĕн пĕрремĕш тĕлне 1933-мĕш çулти машинсен шучĕпе танлаштарсан 13,6 хут ӳснĕ. Чăваш республикĕнче промышленнăç предприйатисем чылай тума пăлăртнă хыççăн, автопарк тата та ытларах ӳсет. Ку ĕнтĕ автохуçалăхсем умне пысăкрах та ответлăрах задачăсем лартать. Вăл задачăсене ăнăçлă пурнăçа кĕртсе пыма автохуçалăхсенче бољшевикла çирĕп йĕрке туни кирлĕ.

Пĕтĕм ĕçе çирĕп йĕрке тăрăх туса пынă автохуçалăхсем ирĕкĕ çулла машинсемпе усă курас тĕлĕшпе лайăх тĕслĕхсем пачĕç. Акă Стройтрестри автохуçалăхах илер. Унта машинсене лайăх тытаççĕ. Машинсене йусасах тăма кадрсем çителĕклĕ. Çавна пула унта машинсем пĕр чăрăнусăр ĕçлеççĕ. Машинсенчен 82 процентĕ йалан ĕçре. Автогужтрестра та машинсемпе усă курассине лайăх йĕркеленĕ. Ремонт ĕçне туса пыма ĕçе пĕлекен шоферсем пур. Вĕсем хушшинче ĕçе тĕрĕс организациленĕ. Çавăнпа ĕнтĕ унти шоферсем: Чунайев, Семенов тата ыт. те уйăхне 500—850 тенкĕ ĕç лесе илеççĕ. Чăвашснабсбыт тата Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕпе ПСК(б) Парти Обкомĕн автохуçалăхĕсем те аван ĕçлеççĕ.

Çав вăхăтрах нумай автохуçалăхсенче автотранспорт ĕçне йапăхтарса йанă. Кусен шутне сыхăну управлени, Шупашкар хулинчи комуналлă хуçалăх, Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителстви, Чăвашсойуз пахча-çимĕç хатĕрлекен сойуз автохуçалăхĕсем кĕреççĕ. Вăл автохуçалăхсенче аварисем час-часах пулаççĕ, машинсене тирпейлĕ тыткаламаççĕ тата машинсем патне тĕрĕслемен çынсене йараççĕ. „Заготзерно" Чăваш кантурĕ пур машинсене те усă пĕлĕт айĕнче тытать. Унта шоферсем валљи ĕçлеме, пурăнма условисем туса паман. Пĕчĕк пӳлĕмсенчех 4—5 шофер пурăнать, ĕç тумтирĕсем паман. Шоферсен ĕçĕсене тата автопаркăн пĕтĕм ĕçне шута илесси хăй тĕллĕн çеç пулса пырать.

Автотранспăрт ĕçне тĕрĕслесе пыракан автоинспекци те ку тарана çитиччен автохуçалăхсен ĕçĕсене тĕрĕслессипе, автотранспăрт ĕçне чăрмантаракан çынсене тăрă шыв çине кăларассипе сахал ĕçленĕ. Вăл тĕрлĕрен айăпсем пирки шоферсене çеç ответ тыттарнă. Автохуçалăхсен руководителĕсене, вĕсем те шоферсемпе пĕр танах ответлă пулнине, манса хăварнă.

Автотранспăрт ĕçĕнчи йĕркесене пăхăнманни, шоферсем час-часах ĕçсе ӳсĕрĕлни пысăк чăрмав кӳрет. Чăнах та 1937-мĕш çулта 1936 мĕш çулхипе танлаштарсан аварисен хисепĕ чылай чакнă. Çапах та автотранспăрт ĕçне тишкерсе тухнă хыççăн, [illegible] кĕсене пăхăнманни нумай пулни палăрать. Паллах, йĕркесене пăхăнманни пуринчен ытла шоферсем ĕçсе ӳсĕрĕлнипе пулнă. Автомашинсем йусав мар пирки пулнă çитменлĕхсем те нумай.

Йĕркене пăсма шоферсене пулăшакан автохуçалăх руководителĕсем те пур. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Çĕнĕ Аттай колхоз председателĕ И. Комиссаров пĕрмайах шоферсемпе пĕрле ĕçнĕ. Вăл машинсем йусав маррине пĕле тăркачах машинпа çӳреме права илмен çамрăк шофера пассажирсене леçме йанă. Çитменни çине шоферĕ ӳсĕр пулнă. Çавна пула Матвейев шофер авари тунă.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн системинче машинсемпе усă курас тата вĕсене пăхса усрас йĕркесене нумай пăсаççĕ. Çĕрпӳ МТС гаражĕнче пушар пулни пĕтĕмпех администрацийпе техникăла работниксем ӳрĕк-сӳрĕк ĕçленинчен, йĕркене пăхăнманнинчен килнĕ. Хатĕрлев комитечĕн Çĕрпӳ районĕнчи уполномоченнăйĕ Иванцов пĕр уйăх хушши автомашинпа çӳреме права илмен шоферпе çӳренĕ. Республикри валђах-чĕрлĕх хатĕрлекен кантур пĕр уйăх хушши Никифоров шофера ĕçлеттернĕ, унăн права пулман.

Автохуçалăхсенче ирсĕрлĕхсем пуласси час-часах машинсем çине тĕрĕслемен шоферсене лартнинчен килнĕ. Шоферсене ĕçе илнĕ чухне вăл малтан ăçта ĕçленипе, мĕнле ĕçре ĕçлевипе интересленменни ташмавла елементсене сăтарла ĕçсем тума май парать.

Чăваш АССР правителстви пассажирсене тата грузсене турттарас ĕçе Чăвашавтогужтрест çине хунă. Пассажирсене турттарасси автогужтрест панă билетсем тăрăх тата иккĕмĕш класа кĕрекен шоферсемпе çеç пулса пымала. Анчах та автохуçалăхсен руководителĕсем чылайăшĕ çавна пурнăçа кĕртмеççĕ. Чăвашкоопинсойуз октăбĕрĕн 26-мĕшĕнче 18 çынна лартса вĕсенчен 118 тенкĕ илсе шофера списăк туса панă та, вĕсене Канаша илсе кайма хушнă. Тĕрĕслесе каласан, шоферăн çынсене лартса çӳреме права та пулман. Чăвашсойуз йĕркене пăхăнмасăр çынсене лартса çӳреме ирĕк парать.

Шоферсем хатĕрлес тата вĕсен квалификацине ӳстерес тĕлĕшпе автохуçалăхсем тытакан Халăх Комиссариачĕсен, учреждениĕсен ĕçлемеле. Ку ĕçе Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе Чăвашвăрманпромсăр пуçне нихăш организаци те пурнăçа кĕртсе пымасть. Канашра тата Улатăрта ĕçлекен курссем кирлĕ таран кадрсем пама пултараймаççĕ. Шупашкарти автоклуб та 30 çын кăларнипех лăпланса ларчĕ. Халђхи вăхăтра шоферсем хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те тумасть.

1938-мĕш çулхи йанварĕн 24-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи шоферсемпе автохуçалăх руководителĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху, автопаркăн ĕçĕсене, шоферсем хатĕрлес тата вĕсĕн квалификацине ӳстерес ыйтусене сӳтсе йавнă хыççăн, татăклă задачсем кăларса тăратрĕ. Вăл задачсенчен пĕри—правилăсене пăсакансемпе вирлĕн кĕрешсе пырасси пулать. Кана ăнăçлăн пурнăçа кĕртме ĕçре çирĕп йĕрке туни, шоферсем хушшинче стахановла йухăма вăйлатни, вĕсене ĕçлеме условисем туса пани кирлĕ. Автохуçалăх руководителĕсен çаксене йаланах асра тытмала. Шоферсемпе таччăн çыхăнса ĕçлемеле.

С. Мижеров.

Чувашглавлит

Хăйсен чыслăхне çухатмаççĕ

Тĕкĕрçри йалпо—Шупашкар районĕнчи лайăх ĕçлекен йалпосенчен пĕри 1937 çулта вăл аван ĕçлесе, 1.150.000 тенкĕлĕх тавар сутас вырăнне, 1.151.237 тенкĕлĕх сутса, плана 101,1 проц тултарчĕ. 1936 çулхипе танлаштарсан таварçаврăнăш 2 хут ӳснĕ. Çĕнĕрен члена 51 çын илнĕ. Чĕр тавар хатĕрлес тĕлĕшпе плана 103 процент тултарнă.

Йалпо 1937 çулта 11.527 тенкĕ таса тупăш илчĕ.

Йалпо потребителсене валђи куллен кирлĕ таварсене çителĕклĕ кӳрсе килсе тăнă.

Йалпо пайшчиксен наказĕсене пурнăçа кĕртсе пырать. Катĕркассинчи пайшчиксем хăйсен йалĕнче лавка лартса пама ыйтнăччĕ. Йалпо çак наказа çийĕнчех пурнăçа кĕртрĕ. Татах тепĕр лавка уçнă. Çĕнĕ лавкана мăкласа, кăмака лартса тунă.

Йалпо çĕнĕ грузовик туйаннă. Грузовик лавкасем валђи таварсем турттарать Грузовикран йалпо 2 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Н. Осипов.

Коммуниссемпе комсомолецсен вĕренӳвĕ

Кадрсене большевикла воспитани парасси вăл—парти пур организацийĕсемпĕн те чи кирлĕ ĕç пулса тăрат.

Çакна Йелчĕкре ăнланнă. Хаљ районри коммуниссемпе комсомолецсем пурте политикăна вĕренес ĕçе хастарлăн тытăннă.

Парти райкомĕ çумĕнче парти историне заочнă вĕренмелли уйрăм кружоксем ĕçлеççĕ.

Районри коммуниссенчен парти историне заочнă вĕренекенсем 43 çын. Вĕсенчен 36-шĕ парти членĕсемпе кандидачĕсем, 7-шĕ комсомолецсем. 43 çынна икĕ группăна уйăрнă. Заљатисем йĕркелĕ пулса пыраççĕ. Иртнĕ çулхи заочнă вĕренӳпе танлаштарсан, кăçалхи çул вĕренӳ пахалăхĕ уйрăмăнах лайăхлашни палăрат. Çапах та хăшпĕр заочниксем: Жирнов, Иашин, Сусликов тата Йаковлев йулашки заљатине (6-мĕш темăпа) начар хатĕрленшĕ, конспектсемсĕр пынă. Популљарнăй курспа вĕренекен группăри Носов, Самсонов, Данилов йулташсем заљатисене конспектсемпе лайăх хатĕрленсе пырса, „отличнă" паллăсемпе вĕренеççĕ.

Популљарнăй курсра вĕренекен заочниксем вĕренӳ пахалăхне хăпартассипе повышеннăй курсра вĕренекенсене ăмăртăва чĕнсе договор тунă. Договор вĕренӳ пахалăхне ӳстерме, кашни коммунисах „отличнă" тата „хорошо" паллăсемпе вĕренме чĕнĕт. Заљатисем кашни уйăхрах йĕркелĕ пулса иртеççĕ.

Райкомри парткабинет çумĕнчех политэкономипе заочнă вĕренес ĕçе те йĕркелесе йанă. Кунта пурĕ 14 коммунис вĕренеççĕ.

Заочнă вĕренӳсĕр пуçне парткабинет çумĕнче парти историне вĕренессипе тата 2 кружок ĕçлеççĕ. Парткабинет пуçлăхĕ Романов йулташ йертсе пыракан кружокра 19 çын. Вĕсенчен парти кандидачĕсемпе членĕсем 9, сочувствуйушчисем—7 çын тата 3 комсомолец. Заљатисем кашни уйăхăн 2, 13, 19, 28-мĕшĕ числисенче йĕркелĕ пулса пыраççĕ.

Кусемсĕр пуçне районра колхозри активиссем 160 çын заочнă вĕренеççĕ. Çак 160 çынна 4 группăна уйăрнă. „Курнавăш", „Тăрмăш" тата Ленин йачĕпе тăракан колхозри заочниксем валљи радио лартса панă. Кунти заочниксем радиолекцисене йĕркелĕ итлесе пыраççĕ, конспектсем çыраççĕ. Колхозсенчи заочниксемпе 4 хутчен конференци туса ирттернĕ. Парткабинет нихăçан та пушă лармасть. Коммуниссемпе комсомолецсем тата партире тăманнисем пырса йаланах хаçат-журналсем, кĕнекесем вулаççĕ, лекцисем итлеççĕ.

Çакăнпа пĕрлех кунти ситменлĕхсене те кăтартмала. Хăшпĕр коммуниссем заљатисене конспектсăр пыраççĕ, радиолекцисене йĕркелĕ итлесе пымаççĕ, тĕрлĕ темăсем тăрăх художествăлă литературăсем вуламаççĕ. Заочниксене вĕренме литературă сителĕклĕ таран тупса паман. Консультацисем те йĕркелĕ иртмеççĕ. Парткабинет пайанхи куна çите заочниксемпе пĕр консультаци те туса иртермен.

Ф. Майков.

ЕЛĔКСЕМ ЙУЛСА ПЫРАÇÇĔ

Елĕк райĕçтăвкомĕ вăрман хатĕрлевĕ синчен час-часах ларусенче, канашлусенче сӳтсе-йават. Нумай калаçаççĕ ку ыйтупа. Анчах ĕç малала кайни курăнмасть. Вăрман хатĕрлевĕ иртнĕ çулхи пекех йапăх пурнăçланса пырат. Кăçалхи çулăн 1-мĕш кварталĕнче районăн 17 пин кубла метр касса хатĕрлемеле, 30 пин кубла метр турттармала пулсан, пайанхи куна пĕтĕмпе те 2124 кубла метр çеç касса хатĕрленĕ тата 762 кубла метр турттарнă.

Райĕçтăвком работникĕсем район центрĕнчен тухмасăрах ĕçе тăвасшăн. Вĕсем йалсенче пулмаççĕ, колхозниксемпе йединоличниксене вăрманта ĕçлемелли условисем синчен калаçса памаççĕ. Ĕçе вĕсем телефон тăрăх туса пыраççĕ.

Чылай колхозсем пĕрремĕш квартал планне тултарассипе ĕçе те тытăнман-ха. Матăк йалсоветĕнче 3 колхоз, Панкли йалсоветĕнче—4 колхоз пайанхи куначчен те вăрмана тухса курман.

Районта лайăх ĕçлекен колхозсем те пур. Крымзарайкă йалсоветĕнчи Вăрманкас колхозĕ пĕрремĕш квартал планне 76 процент тултарчĕ. Çавăн пекех Лупашкари „Трудовик" колхоз 86 кубла метр вăрман хатĕрлес вырăнне 174 кубла метр, Куракăш колхозĕ 104 кубла метр вырăнне 156 кубла метр хатĕрлесе плана ытлашшипех тултарчĕ. Анчах кун пек колхозсем районра питех те сахал. Районри руководительсем вĕсен опытне сарассине нимех те тумаççĕ.

Елĕксен нумай калаçса лариччен, ĕçе куçас пулат.

Ваç. Йефремов.

Çитĕнӳпе лăпланнă колхоз

ВĂРНАР. Кивйахакассинчи „Пионер" колхоз 1935—36 çулсенче вăрман хатĕрлев ĕçĕнче малта пына. Унщăн ăна районти организацисем те ырланă.

Йулашки уйăхсенче колхоз малтан тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларчĕ. Вăл ăкă çакăнтан та лайăх курăнат. Колхоз иртнĕ çулхи 4-мĕш квартăлти вăрман хатĕрлев планне пĕтĕмпе те 25 процент çеç тултарчĕ. Кунсăр пуçне тата кăçалхи пĕрремĕш квартăл планне тултарасси те начар пырат. 500 кубла метр хатĕрлемеле, çавăн чухлех турттарамала пулсан, пайанхи куна пĕр кубла метр та хатĕрлемен. Колхоз председателĕ Сергейев ĕçе ырантан виçминене тăсса пырат.

Н. Козлов.

Ертел халĕ те начар ĕçлет

ТУРХАН. Липовкăри Ленин йачĕпе тăракан вăрсталăх ертелĕн сменисем кулехи нормăсене 40—50 процентран ытла тултараймаççĕ. Кашни кун 72 тӳк струшкă саваласа кăлармала пулсан, пĕтĕмпе те 25—30 тӳк çеç саваласа кăлараççĕ.

Ертел начар ĕçлени ĕç хатĕрĕсем йĕркеллĕ маррипчен килет. Станоксем йӳсавлă мар, чĕнсем начар пирки час-часах ĕçленĕ вăхăтрах татăлса кайаççĕ. Материалсем тăратассине йапăх йĕркеленĕ. Çавăн пирки те пысăк простойсем пулаççĕ.

Техникăна вĕренессипе начар ĕçлеççĕ. Ĕçлеме вĕренсе çитмен рабочисенех станоксем патне тăратаççĕ. Анчах ертел техрукĕ Алексейев ĕçе йĕркелесе йама тăрăшмасть. Вăл рабочисен сĕнӳвĕсене пурнăçламасть.

Бухгалтери те начар ĕçлет. Хăшпĕр рабочисем 1937-мĕш çулхи ĕçукçине те илеймеççĕ. Бухгалтер Вйаткин йаланах рабочисене „ыран пулат" тесе пурăнат.

Тăваттăн алă пуснă.

3000 тенкĕлĕх сарчĕ

Андрейева почтальон Вăрнарти зооветтехникумри студентсем, преподавательсем тата служащисем хушшинче тĕрлĕ хаçат-журналсене 3.000 тенкĕлĕх сарчĕ. Хаçатсене подписчиксем патне вăхăтра илсе пырса парат. **А. Подьаков.**

** Вăрмар районĕнчи Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозри Степанов почтальон хаçат-журнал сарассипе тăрăшса ĕçлет. 1938 çулшăн масса хушшинче 1500 тенкĕлĕх тĕрлĕрен хаçат-журнал сарчĕ.

В. Андрианов

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Пианиссен Пĕтĕм Сойузри пĕрремĕш конкурсĕн ларуечĕ И. И. Миновски йулташ (Мускав). Вăл конкурсра 10.000 тенкĕ премиилнĕ. 1936 çулта Мускаври консерваторирен вĕренсе тухнă, халь художествăлă ăсталăхăн аслă шкул аспиранчĕ. Л. Доренски фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Перекет касси тата займ укçи пухни

Пасар кунĕ. Ку кун вара Тăвайри организацисене ытти кунхисенчен чылай нумайрах çын пырат. Хăшĕ райĕçтăвкома кĕрсе тухат, тепĕри, пасара анмала май, почтă урлă посылкă йама килет. Виççĕмĕшĕ перекет кассине займ облигацийĕсене тĕрĕслеттерме кĕрет.

Перекет касси. Унта кĕрсен урай варринче пĕр сарлакарах сĕтел тата ун патĕнче 2—3 пукан ларат. Сĕтел синче чечек, чернилпа ручкă тата графинпа шыв. Ку ĕнтĕ перекет кассине пыракансене лайăхрах кĕтсе илес тенине кăтартат. Çапах та чи кирлине манса хăварнă. Займ выљав таблицийĕсене пурне те курăнмала çĕре, стена çумне, кантăкласа çапса хумала пек тупăнат. Вĕсем халĕ займ таблицийĕсене пĕр журнал варне çĕлесе хунă. Апла займ облигацийĕсене пĕри тĕрĕслет пулсан, ытти çынсен ахаљ пăхса тăмала пулат. Перекет кассинче займ укçине хывма чĕнекен лозунгсем çапман.

Район займ укçи пухмали пĕрремĕш квартал планне 10,8 процент кăна тултарчĕ. Хăшпĕр колхозсем йенчен займ укçи пухас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлени паларат. Çĕнĕ Ишпусĕнчи Чапайев йачĕпе тăракан колхоз 1433 тенкĕ, Йеншихх Нăрвашри „Красная Чувашия" колхоз 2070 тенкĕ займ укçи пухрĕ.

Перекет касси займ уполномоченнăйĕсемпе иртнĕ çулхи декабĕр уйăхĕнче тата йанвар уйăхĕнче канашлу туса иртерчĕ. Çакăн хыççăн займ уполномоченнăйĕсен активлăхĕ хăпарчĕ. Çĕнĕ Ишпус йалсовет секретарĕ Ишмйаков йулташ йанварĕн 27-мĕш кунĕнче 1108 тенкĕ займ укçи килсе хыврĕ. Çĕнĕ Пуйанкассинчи Гаврил Николайев, Кивĕ Пуйанкассинчи Александр Максимов, Йамбулатоври Ив. Йаковлев уполномоченнăйĕсем хайсен участкисенче займ укçи пухса пĕтернĕпе пĕрех. Вĕсене хăйсем займ укçи пухасси çинчен колхозниксем хушшинче ăнлантарса пыни нумай пулăшат.

Займ укçине пухнă хыççăнах виçĕ кун хушшинче перекет кассине пырса хывмала. Ăна хăшпĕр йалсоветсем ăнланасшăн мар. Иртнĕ çулхи нойабĕр уйăхĕнче Темер йалсоветĕ колхозниксенчен 180 тенкĕ займ укçи пухнă. Ăна вара йалсовет хăйне валљи вутă илнĕ çĕре йанă. Çав укçана халĕ йанвар уйăхĕнче кăна килсе хывреç. Чутей йалсоветĕ те нойабĕрĕн 28 мĕшĕнче пухнă укçана йанварĕн 17-мĕшĕнче тин леçсе пачĕ. Унпа малтан йалсовет трахпункт валљи вутă илнĕ. Чутейрах тата служащисем хывнă займ укçине перекет кассине леçсе памасăр нумай хушă тытса тăнă.

Займ укçи пухасси куллен туса пымали ĕç. Унпа пĕрлех займ облигацийĕсене тĕрĕслессине организацилесе пыни пулмала.

Малта пыракансен опычĕ пысăк

ВĂРНАР. Районра малта пыракан йалсовечĕсемпе колхозсем займ укçи пухас плана 100 процент тултарчĕç. Малтикасри „Пĕрлешӳ" колхоз колхозникĕсем „ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетмели займа" кашнийех ик ернери ĕç кунĕ пуçне тивекен тупăш чухлĕ çыранса илчĕç. Вĕсем займ укçине çавăн хыççăнах тӳлесе татрĕç. Ку ĕçре колхоз председателĕ Николайев йулташ активлă ĕçлерĕ. Вăл кирек йепле ĕçре те колхозниксене займ çыраннин усси пысăккине ăнлантарса пачĕ. Унсăр пуçне вăл колхозри финанс активĕсене пухса йаланах калаçусем туса иртерчĕ.

Булатоври Молотов йачĕпе тăракан колхозра та займ укçине пĕтĕмпех тӳлесе татрĕç. Займ укçи пухас çĕрте колхоз председателĕ Михейев йулташпа йалсовет председателĕ Бурмистров тăрăшса ĕçлерĕç.

Çавăн пекех Вăрман Шăхаљ, Кољцовка, Сăкăт, Мăн Хирлеп, Шуркасси йалĕсенчи колхозсем займ укçине çĕр процентпех тӳлесе татрĕç. Вĕсем займ облигацийĕсене алла илчĕç.

Начар ĕçлекенсем те пур-ха. Айкăш йалсоветĕ колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче „ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетмели займа" 5720 тенкĕлĕх сарчĕ. Укçине 185 тенкĕ çеç пухнă. Йалсоветĕнче ĕçлекенсем массăпа тачча çыхăнса ĕçлемеççĕ. Финанс секции членĕсене пухса, канашлусем туса иртермеççĕ.

Мăн Турхан йалсоветĕ иртнĕ çулсенче займ укçи пухас йенĕпе тата ытти ĕçре те малта пычĕ. Халĕ кайа йулса пырат. Займ 4890 тенкĕлĕх çыраннинчен укçине 302 тенкĕ кăна пухнă. Финанс активĕ ĕçлемест. Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе йалсоветĕ пулăшса пымасть.

Финанс пайĕнче тата перекет кассинче ĕçлекен работниксем займ укçине пухас тĕлĕшпе йалсоветĕсене, колхозсене, уйрăм финанс секцийĕсене çителĕклĕ таран пулăшмаççĕ. Малта пыракан секцисен паха опычĕсене сарса пымаççĕ. Çавна пула район займ укçи пухас плана 38 процент кăна тултарчĕ.

Районра лайăх ĕçлекен финанс секцийĕсем нумай. Вĕсен опычĕсемпе усă курма пĕлес пулат.

Ник. Козлов.

Колхозсен кулленхи счот çине хунă укçисем

1935 çулта Чăваш республикинчи колхозсем Государствă банкĕнчи кулленхи счот çине 21 мĕлйун та 230 пин тенкĕ хывнă, 1936 çулта—27 мĕлйун та 878 пин тенкĕ хывнă.

1936 çулхи йанварĕн 2-мĕшне республикăри колхозсен Государствă банкĕнчи кулленхи счот çинче 1мĕлйун та 938 пин тенкĕ укçа пулнă. Вăтамăн кашни колхозлă хуçалăх пуçне 15 тенкĕ те 20 пус тивет.

1937 çулхи йанварĕн 1 мĕшне колхозсен кулленхи счот çинче 2 мĕлйун та 823 пин тенкĕ укçа пулнă. Кашни колхозлă хуçалăх пуçне 18 тенкĕ те 81 пусшар тивет.

1938 çулхи йанварĕн 1 мĕшне—3 мĕлйун та 84 пин тенкĕ пулнă, кашни колхозлă хуçалăх пуçне 27 тенкĕ те 9 пусшар тивет.

Колхозсен кулленхи счот çинчи укçа-тенкисем ӳссех пыраççĕ.

1937 çулхи йанварĕн 1-мĕшне Йĕпреç районĕнчи колхозсен хăйсен кулленхи счочĕ çинче 86 пин тенкĕ пулнă пулсан, 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне—203 пин тенкĕ пулнă. Улатăр районĕнчи колхозсен 1937 çулхи йанварĕн 1-мĕшне—23 пин тенкĕ пулнă, 1938 çулхи йанварĕн 1 мĕшне—119 пин тенкĕ.

Çавăн пекех Йетĕрне районĕнчи колхозсен те хăйсен кулленхи счочĕ çинчи укçисем ӳссех пыраççĕ. 1937 çулхи йанварĕн 1 мĕшне 159 пин тенкĕ пулнă пулсан, 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне—213 пин тенкĕ пулнă.

1937 çулхи III кварталта Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсен кулленхи счот çинчи укçа-тенкисен хисепĕ 5 хут ӳснĕ, Канаш, Куславкка тата Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсен—3 хут ӳснĕ.

И Семенов.

Комсомолăн Трак райкомĕн ĕçĕвчи пĕр çитменлĕх

Трак районĕнчи комсомолецсем хушшинче политикăла вĕрентӳве питĕ начар организациленĕ. Комсомол райкомĕ политвĕренӳ ĕçне йĕркелесе йараспăн тăрăшмасть.

Районра пурĕ 500 комсомолец. Вĕсенчен 387 комсомолец кăна политшкулсенче вĕренеççĕ. Комсомолра тăман çамрăксенчен политшкулсенче вĕренекенсем çук.

Хăшпĕр политшкулсенче заљатисем план тăрăх йĕркелĕ пулса пымаççĕ. Заљатисем пĕр сиктермесĕр, планпа пулса иртекен шкулсенче те çитменлĕхсем питĕ нумай. Чăн малтанхи çитменлĕх вăл—вĕренӳ пахалăхĕ начарри. Райкомолăн штатлă пропагандисĕ Гаврилов йулташ виçĕ кружокра вĕрентет. Анчах, калас пулат, вăл вĕрентнин пахалăхĕ начар. Вĕренекенсем заљатисене вăхăтра пымаççĕ, заданисене лайăх хатĕрленсе конспект çырмаççĕ. Хăшпĕр заљатисене кĕнеке вуланипех иртерсе йараççĕ. Ăнланатăн-и, ăнланмастăн-и—пурĕ пĕрех. Вĕхăт иртнĕ—йурат.

Гаврилов йулташ хăй те политикăна çителĕклĕ таран пĕлмест. Çавăнпа та вăл йанăш ăнлантарнисем те пулнă. Вăл хăйĕн политикăла пĕлӳлĕхне ӳстерессишĕн те тăрăшмасть.

Чылай руководительсем пĕрер заљати иртернипе лăпланса ларнă. Хăшпĕрисем пĕр заљати те иртермен. Хоза-кассинчи политкружокра ĕçлеме уйăрнă пропагандис Йегоров пайанхи куна çите пĕр заљати те иртермен.

Политкружоксенче вĕренмелли кĕнекесем çителĕксĕрри те ĕçре чăрмантарат, çырмали тетрадьсем те çитмеççĕ.

Комсомол райкомĕ политвĕренӳ çине çăмăлттайла пăхнипех ĕнтĕ политкружоксенче ĕçлекен пропагандиссене икĕ хут кăна пухса семинар иртернĕ. Пропагандиссенчен отчот итлемен.

Çак йĕркесĕрлĕхсене Трак райкомолĕн пĕтермеле. Çамрăксене большевикла воспитани парас ĕçе тивĕçлипе организацилемеле.

Закамский.

Комсомолецсем Ленин произведенисене вулаççĕ

Тĕрлемесри (Куславкка р.) комсомол комитечĕ комсомолецсем хушшинче Ленин произведенисене вĕренес ĕçе анлăн пуçарса йанă. Нумайăх пулмасть Ленинăн „Ăмăртăва мĕнле организацилемеле" йатлă статйине сӳтсе-йаврĕç. Çак паха ĕçе йалти ытти çамрăксене те йавăçтараççĕ. **И. Сидоркин.**

Çесси решенисене вĕренеççĕ

Вăрнар. Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн Вăрнар районĕнчи уйрăмĕнчи работниксен арăмĕсем ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çесси решенисене вĕреневççĕ. Йанварĕн 27-мĕшĕнче пулнă заљатире 15 хĕрарăм пулчĕç. Вĕсене Уруков йулташ вĕрентет.

Н. Козлов.

Йапăх ĕçлекен вулав çурчĕ

ЙĔТĔРНЕ. Виççĕмĕш çул ĕçлет ĕнтĕ Кăмаккасинчи вулав çурчĕ. Анчах халиччененех вулав çурчĕ йапăх ĕçлет. Кăçал райçутĕç пайĕнчен вулав çурчен пуçлăхĕ пулса ĕçлеме Шупашкарти вулав çурчĕсен пуçлăхĕсене хатĕрлекен курсра вĕреннĕ И. Василйева йулташа хушнăччĕ. Вăл та вулав çуртне лайăх ĕçлетерессишĕн тăрăшмасть. Вулав çурчĕ час-часах хупă тăрат. Хаçат-журналсем çителĕксĕр çырăнса илнĕ. Пуррисене те тупса вулама хĕн. Шашкă-шахмăт, домино тата ытти вăйă хатĕрĕсене туйанман. Вулав çурчĕ çумĕнче нимĕнле кружок та ĕçлемест. Иртнĕ уйăхра агрокружок организациленĕччĕ. Халĕ вăл кружок та ĕçлеме пăрахрĕ. Спектакљ, вечер çинчен асăнмалли те çук. Çавăн пек йапăх ĕçленипе те ĕнтĕ колхозниксемпе йединоличниксем вулав çуртне пымаççĕ.

Райçутĕç пайĕнче ĕçлекен йулташсем те Кăмаккассинчи вулав çурчĕн ĕçне лайăхлатассипе интересленмеççĕ.

И. Пучковский.

Чăвашсен Тĕп архивĕ 15 çул тултарчĕ

Октйабĕрти социалисăмла револљуциччен Российăра архив материалĕсене пухса йе вĕсене вĕренсе тăракан учреждени пулман. Мĕншĕн тесен, патша агенчĕсем, дворйансем, помещиксем хăйсен йăхтĕпри чина кăтарса пурăнма архив докуменчĕсене хăйсен аллинче тытса усранă. Фабриксемпе заводсем тата ытти предпрнйати хуçисем хăйсен капитал çаврăнăçĕ мĕнле йе мĕнчухлĕ пулни палăрасран хăраса, архив материалĕсене хăйсен аллинче хытă тытса тăнă. Документсене архива пăхса усрама царсă вăрттăн ĕçсене палăртасран хăранă.

Октйабĕрти социалисăмла Аслă револљуци архив ĕçне калама çук чаплă вырăна лартрĕ. Вăл патшапа вăхăтлăх правительствăн чи кирлĕ архивĕсене илсе, ĕç халăх аллине пачĕ. Вăл архивсемпе револљуцин малтанхи кунĕсенче Совет влаçĕ патша тарçисене çапса салатнă вăхăтра нумай усă курнă.

1918-мĕш çулхи ийунĕн 1-мĕшĕнче Владимир Илйич Ленин ал пуснă „О реорганизации и централизации архивного дела" йатлă декрет тăрăх, патша вăхăтĕнче учреждениссем çумĕнче усранă документсемпе ĕçсене тĕп архив тытăмне панă. Çак декрет тăрăх, учреждениссем, предприйатисем тата организацисем архиври документсене Тĕп архив тытăмĕ хушмасăр пĕтермеле мар, пĕтерекенсем суд умĕнче отвот тытаççĕ.

Октйабĕр револљуцийĕ пĕтĕм архив докуменчĕсене тата архив ĕçне йертсе пырассине, архива ĕçхалăхĕн политикла хĕçпăшалĕ вырăнне хурса, пролетарилĕ диктатурăн органĕсене панă. Пĕтĕм Российăри Тĕпĕçтăвкомĕн 1922 çулхи йанварĕн 30-мĕшĕнчи декречĕ тăрăх, кашни национальлĕ республикăри Ĕçтăвком çумĕнче архив ĕçне йертсе пыма Архив Бӳро тунă.

Чăвашсен Тĕп архив тытăмне организацилес ĕç 1918—1922 çулсенче Облăçри Çутĕç пайĕнче пулнă, анчах унăн ĕçĕ куçа курăнман. 1922 çулта декабĕрĕн 16-мĕшĕнче, Облăçри Ĕçтăвком президиумĕ çумĕнче Тĕп архив организациленет, февралĕн 1-мĕшĕнче архив ĕçĕ пуçланса кайат.

Çак 15 çул хушшинче Чăвашсен Тĕп архив тытăмĕ, патша вăхăтĕнчи тата вăхăтлă правительствă учреждениĕсенчен йулнă архивсене пухса йĕркелерĕ тата совет учреждениĕсемпе колхоз йухăмĕн архивĕсене туса йĕркелес тĕлĕшпе калама çук пысăк ĕçсем туса иртерчĕ. Архив строительствин ĕçĕ вăйланса пычĕ. Архив докуменчĕсене йĕркелĕ усрамалли çуртсем кирлĕ таран пулман пулсан та, Октйабĕр револљуци чăваш ĕçхалăхне панă архив халĕ чăн та историлĕ, хуçалăхла тата культурăла документсемпе пуйан базă пулса тăчĕ. Тĕп архивра патша чухнехи тата Октйабĕр револљуци хыççăнхи архивсем 600 фонд ытла шутланаççĕ, пĕрремĕшпе вĕсенче çур мĕлйуна йахăн документсемпе ĕçсем усранаççĕ. Вĕсем пурте чăвашсен патша саманинчи хĕн-хурлă, асаплă пурнăçне, чăвашсем хушшинчи револљуцилĕ йухăмĕсене, чăваш халăхĕ социалисăм строительствинче паттăрăн ĕçленине, чăваш халăхĕн производствăлă вăйсене сарас кĕрешӳри опытне çутатса паракан документсем.

Халĕ районри архивсенче те тĕрлĕрен учреждениссен, йалсоветсен тата колхозсен архивĕсем 1018 фонд усранаççĕ. Вĕсем пурте йалхуçалăхне социалисăм çулĕпе илсе пырса тĕреклетнине, Чăваш республикĕ культурă йенчен хăвăрттăн ӳссе пынине кăтартаççĕ.

Районсенчи архив материалĕсене 1926 çултанпа тĕп архив шута илсе пырат. Чăваш архивĕсенче вунсаккăрмĕш ĕмĕртенпе, тепĕр майлă каласан, çĕр çитмĕл çул усранакан авалхи ĕçсем пур, чиркӳсен ĕçсем икçĕр çул ытла усранаканни те пур.

Тĕп архив тытăмĕн бюджечĕ кашни çул ӳсет. 1933 çултанпа кăçалхи çулччен вăл пилĕк хут ӳсрĕ. Ку ĕнтĕ партипе правительствă архива хытă пулăшнине кăтартат. Тĕп архивра халĕ Историлĕ-архив институтĕнче вĕренсе тухнисем икĕ çын ĕçлеççĕ. Российăри Тĕп архив çумĕнчи курсра вĕренсе тухнисем икĕ çын, крайри курсран тата Хусанти курсран вĕренсе килнисем икĕ çын ĕçлеççĕ.

Архив материалĕсем тăрăх ĕçхалăхне вĕсем Хĕрлĕ çарта пулни, совет учрежденисенче ĕçлени йе тата тĕрлĕрен шкулсенче вĕренни çинчен сак йулашки вунă çул хушшинче Тĕп архив 10.062 справкă панă.

Кăçал тĕп архив тытăмĕ аслăлăх ĕçне вăйлăн пуçласа йарат. Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставки валљи материалсем пухма, Разинпа Пугачевăн револљуцилĕ йухăмĕ çинчен, Октйабĕр револљуци, хула истори йе тата ытти темăсемпе тĕпчесе вĕренме пуçланă.

Архивра усранакан документсемпе историксем, аслăлăх работникĕсемпе чăваш писателĕсем усă кураççĕ.

Архив ĕçне малала вăйлăн çĕклесе йарассинче партипе совет, хуçалăх организацисен, комсомолăн тата колхоз общественнăçĕн хĕрӳлĕн пулăшмала.

Пав. Йермолайев.

Куллен кирлĕ таварсене туса кăларасси ӳссех пырат

Чăвашпромсойуз системи тăрăх еççыннисем валљи куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси 1938 çулта чылай ӳсет.

Иртнĕ çулта пулман çĕнĕ производствăсем ĕçлеме пуçлаççĕ: музыкă инструменчĕсене 50 пин тенкĕлĕх туса кăлармала, спорт инвентарĕсем—45 пин тенкĕлĕх, выљамали йапаласем — 100 пин тенкĕлĕх.

Кĕпе-тумтир çĕлесе кăларасси те иртнĕ çулхипе танлаштарсан нумай ӳсет. Иртнĕ çулта 16 пин мăшăр çăматă кăларнă пулсан, кăçал 35 пин мăшăр, атă-пушмак 25 пин мăшăр кăларнă пулсан, кăçал 33 пин мăшăр кăлараççĕ, 210 пин мăшăр чăлха çыхмала.

Хуçалăхра кирлĕ йапалавсем туса кăларасси те нумай ӳсмеле. Чӳлмек тата ыт. 235 пин тенкĕлĕх туса кăлармала, вĕрен тилхепе йавасси иртнĕ çулхипе танлаштарсан 2 хут ытларах ӳсет.

Кăçал таварсен пахалăхне лайăхлатасси çине уйрăмах хытă çаврăнса пăхаççĕ.

С. Воробйов.

Колхозри драмкружок

Анатри Хоразанти (Елĕк р-нĕ) колхоз çумĕнчи драмкружок аван ĕçлет. Кăçал драмкружок членĕсем „Тăшман çывăрмасть", „Йалта" пйесăсене выљаса пачĕç. Уйрăмăнах постановкăсенче Иванов, Прокопйев, Степанова, Андрейева йулташсем аван выљаççĕ.

Халĕ „Айăп" йатлă пйесăна выљама хатĕрленеççĕ.

Г. Николайев.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

ВАТАМ КИТАЙРА

ХАНЬКОУ, йанварĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Таньцзинь—Пукоу чукунçулĕн кăнтăр участкинче, Аньхуей провинцинче, Китай çарĕсем наступлени туса пыраççĕ. Китай çарĕсен чаçĕсем уйрăмăнах Льянцзйашань çине хыттăн наступлени тăваççĕ. Хире-хирĕç пырса кĕрсе, хире хирĕç тытăçса питех те хайарран çапăçнă хыççăн (ун пек çапăçусем вунă хут та ытла пулса иртнĕ) Йапони çарĕсем Мингуанран (Фыньйанран кăнтăрпа хĕвелтухăçнелле) кайала чакаççĕ. Çак калама çук хайар çапăçура йапонецсен 1.000 салтак ытла вилнĕ.

Йулашки хыпарсем тăрăх, Чутунцзйао патĕнче те, Чучжоуран çурçĕрелле 25 километрта, пысăк çапăçу пуçланса кайнă.

Лÿхе хули (Йанцзы йуханшывĕн çурçĕр сыранĕнче, Нанкин тĕлĕнче) йапонецсем йышăннă[с]кер, ишĕлчĕксем çеç пулса йулнă. Хулари çуртсен чылайĕш пайĕ ишĕлнĕ. Мирлĕ пурăнакан халăх хушшинчен 1.500 çын ытла пĕтнĕ. Хуларан туха тарма ĕлкĕрнисем пĕрлешĕнсе, 4 000 çынлă партизанла отрйад тунă. Отрйадри çынсен чылайĕшĕн пăшал пур. Отрйада 60 çулхи Чан Йу-Цзе йертсе пырать, унăн отрйачĕ халĕхи вăхăтра Лÿхе хули патне пырса кĕнĕ çĕрте тăрать.

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агенствин Шанхайри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, йапонецсем Таньцзинь-Пукоу чукунçул тăрăх çурçĕрелле куçнă пулнă, анчах вĕсене Мингуан патĕнче чарса хунă. „Таймс" хаçатăн корреспонденчĕ ĕнентерсе пĕлтернĕ тăрăх, Мингуан патĕнче хире-хирĕç тытăçса çапăçнă чухне йапонецсен 1 000 салтак пĕтнĕ. Корреспондент Лунхай чукунçулĕнчен çурçĕрелле Китай çарĕсем хăйсен позицисене малтанхи пекех çирĕппĕн тытса тăни çинчен çырать.

ЛОНДОН, йанварĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агенствин Шанхайри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Китайран илнĕ хыпарсем тăрăх, Китай çарĕсем, йапонецсем Мингуанран кайала чакнă чухне, Йапони салтакĕсене нумай тыткăна илнĕ.

ÇУРÇĔР КИТАЙРА

ХАНЬКОУ, йанварĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Таньцзинь—Пукоу чукунçулĕн çурçĕр участкинче, Шаньдун провинцинче, пĕчĕк çапăçусем пулса иртнĕ. Мыньинрен (Цзинанрен кăнтăрпа хĕвелтухăçнелле) кайала чакнă чухне тăрса йулнă Йапони çарĕсен йулашкийĕсене хуларан 40 километрта китайецсем хупăрласа илнĕ. Цзинан таврари лару-тăру çинчен сведенисем çук.

Йанварĕн 30-мĕшĕнче, кăнтăрла, Йапонин тăватă самольочĕ Пин-Йан (Линфын) çине бомбăсем пăрахнă. Пин Йан Шаньси провинцин кăнтăрпа хĕвеланăç пайĕнче ларать. Çав кунхи тех Йапони самольочĕсен ескадрильйи Лойан (Хенань провинци) çине пырса тапăннă. Йапони ескадрильйине хирĕç Китай авиацийĕ тухнă. Сывлăшра çур сехете йахăн çапăçнă. Йапони 21 самольотĕнчен виççĕшне персе антарнă. Йапони самольочĕсем халăхсем пурăнакан вырăнсем çине пурĕ 40 бомбă пăрахнă, бомбасенчен тăватташĕ çеç тĕле тивнĕ, темиçе çурта ишĕлтерсе антарнă.

Йанварĕн 30-мĕшĕнче касхине Йапони çарĕсем Вэйхой (Хенань провинци, Чжандерен кăнтăртарах) çине атакăланă, вĕсене Йапонин вунă самольочĕ хÿтлесе пынă. Китай çарĕсем хирĕç хытăн тăнă. Вĕсем Йапони çарĕсен атакине сирсе пăрахнă. Йапонецсен пысăк сухатусем пулнă.

КĂНТĂР КИТАЙРА

ХАНЬКОУ, йанварĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Йапони самольочĕсем (пурĕ тăхăр самольот) Вампу çине (Кантонран инçех мар утрав) пырса тапăннă, вунă бомбă ытла пăрахнă вĕсем. Икĕ çын вилнĕ.

Йанварĕн 29-мĕшĕнче Йапони самольочĕсем икĕ хутчен Цзичжоу çине (Хайнань утравĕнче) пырса тапăннă. Пăрахнă бомбăсенчен пĕри чухăнсем пурăнакан тĕле тивнĕ. Пурĕ 20 çурт ишĕлсе аннă, вилнисем те пулнă.

Китай хĕрарăмĕсем чĕнсе калани

ХАНЬКОУ, 30-I (ТАСС). Ĕнер Ханькоура Китайри хĕрарăм организацисене йышăннă. Хĕрарăм организацисен вăрçă вăхăтĕнчи ĕçĕ çинчен тата вĕсен фронтри госпитальсенчи—Йапони çарĕсем бомбă пăрахса çĕмĕрекен госпитальсенчи паттăр ĕçĕ çинчен Сÿ Кай-сÿй каланă. „Йапонецсен тискерлĕхĕ уйрăмăнах Китай хĕрарăмĕсемшĕн чăтмала мар", — тенĕ Çурçĕр Китайри патриотла организацисенчи представителница Лью Цзин-йан. „Йапонецсем йышăннă вырăнсенче,—калана вăл малала,—çав вырăнсенчен тарса тухма ĕлкĕреймен хĕрарăмсене йапонецсем казармăсене ăсатаççĕ, унта вара тĕрлĕ майпа мăшкăласа асаплантарнă хыççăн, вĕсене вĕлереççĕ. 50 çулхи тата 60 çулхи хĕрарăмсене те хĕрхенсе тăмаççĕ. Нанкинра Йапони салтакĕсем 2.000 йахăн хĕрарăма ирĕксĕрленĕ тата вĕлернĕ. Цзинчженре (Хебей провинци) Йапони салтакĕсем 50 хĕрарăма ирĕксĕрленĕ тата вĕлернĕ". Йапони военщчини мăшкăланине хирĕç ответлесе Китайри мĕн пур халăх хĕçпăшалланать, Йапони тылĕнче партизансен отрйачĕсене тăвать. Хĕрарăмсем партизанла отрйадсенче уйрăмах активлăх кăтартаççĕ.

Йутçĕршыв çыннисем темиçен сăмах тухса калана, вăл шутра Америкă посолĕ Джонсон та, Анна Луиза Стронг, Агнеса Смедли тата ыт. те.

Китайри хĕрарăм организацисен федерацийĕ хăйĕн манифестĕнче тĕнчери пур хĕрарăмсене те çапла чĕнсе каланă: „1. Вăрçăра аманнă салтаксене тата килсĕр-çуртсăр тăрса йулнă беженцăсене пулăшас кампанийе хăвăр çĕршывсенче сарса йарăр. Пире пуринчен ытла медикаментсем çитмеççĕ. 2. Хăвăр çĕршывсенчи правителствăсенчен Йапонине хирĕç çапăçакан Китайа пулăшу пама çине тăрса ыйтăр. 3. Китайа волонтор специалиссем ытларах йарăр тата Китайри лару-тăрува тĕпчесе пĕлме организацисем тăвăр. 4. Йапонине економикă йенĕпе бойкот тумала, Йапонине кивçен укçа памала мар, Йапонине хĕçпăшал сутмала мар тăвăр".

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

ЦЕНТРТИ ФРОНТ

Еспань агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Карабанчел сектăрĕнче йанварĕн 29-мĕшĕнче, çĕрле, республиканецсем икĕ минă сиктерсе йанă. Минăсем сиксе çурăлса кайнипе пăлхавçăсен пулеметсем лартнă вырăнĕсем темиçе те тĕппипех пĕтнĕ. Атакă туса, республиканецсем çав минăсем сиксе çурăлса кайнă района йышăннă, вунă çын тыткăна илнĕ.

Пăлхавçăсен вилнисемпе аманнисем 150 çын шутланаççĕ.

Кăнт кайарахпа Карабанчел сектăрĕнче республиканецсемпе пăлхавçăсен çарĕсем мортирăсенчен хире-хирĕç калама çук хыттăн персе тăнă. Çапăçу ытти сектăрсене те саралнă. Хире-хирĕç персе тăни икĕ сехете йахăн пынă. Республиканецсем хăйсен позицисене малала илсе пырса, темиçе çурт йышăннă. Вăл çуртсенчен пăлхавçăсене хăваласа йанă.

Йанварĕн 31-мĕшĕнче ирхине 10 сехетре пăлхавçăсем Мадрид çине артиллерирен хыттăн пенĕ. Артиллерирен пересси çур сехете пынă. Вилнисем йышлах мар. Республикă артиллерийĕ пăлхавçăсен батарейĕсене хăвăрттăн шыраса тупса, вĕсене шарлами тунă. Артиллерирен хире-хирĕç пересси кăнтăрла 12 сехет тĕлĕнче каллех пуçланса кайнă, анчах малтанхи пек хыттă мар.

ХĔВЕЛТУХĂÇРИ (АРАГОНИРИ) ФРОНТ

Испанин оборонă министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Теруел фронтĕнче республикăн зенитлă батарейĕсенчен пĕри йанварĕн 30-мĕшĕнче пĕр кун хушшинче фашиссен виçĕ самольотне персе антарнă. Оборонă министрĕ батарей командирне наградăласси çинчен приказ панă.

КĂНТĂРТИ ФРОНТ

Испанин оборонă министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Серро Бурдо тата Арана сăрчĕсем патĕнче, Пеньйарройа сектăрĕнче, пăлхавçăсем республиканецсен линийĕсене татса кĕресшĕн пулнă, республикă çарĕсем вĕсене кайала хăваласа йанă. Çав фронтăн ытти сектăрĕсенче—йаланхи пекех хире-хирĕç персе тăраççĕ.

АВИАЦИ ĔÇĔ

Гавас агентстви пĕлтернĕ тăрăх, йанварĕн 30-мĕшĕнче фашиссем Барселонă çине бомбăсем пăрахсан, хулара 137 çын вилнĕ, вĕсенчен 77-шĕ ачасем, 37-шĕ—хĕрарăмсем. Çуртсен ванчăкĕсем хушшинче çын вилнисем халĕ те тупаççĕ. Фашиссем Барçелонă çине пырса тапăннă чухне, республикăн зенитлă батарейĕсем фашиссен икĕ самольотне персе антарнă.

ТАСС корреспонденчĕ Барселонăри—хăй шутласа пахнă тăрăх, йанвар уйăхĕнче фашиссем бомбăсем пăрахнипе республикă тылĕнче мирлă халăх хушшинче 1.000 çын ытла вилнĕ тата 1500 çын ытла аманнă. Çав вилнисемпе аманнисенчен çуррине йахăн Барселонă хулине тивет.

Германири тĕрмесенчи фашисла террор

Швейцарири коммуниссен партин хаçачĕ „Фрейхейт" çапла пĕлтерет: халь тин ĕнтĕ çакă паллă пулчĕ — 1937 çулхи октйабĕрĕн 21-мĕшĕнче Берлинри „Моабит" текен тĕрмере службăра пулнă Морица, „политикăла ĕçсемшĕн хупса лартнисем çине йĕркене пăсса пăхнăшăн", 15 çуллăха каторгăна йамала тунă. Морица—хупса лартнисемпе, вăл шутрах Тельман йулташпа та, етем пек пулнăшăн айăпланă.

Судра Мориц хăйне хăйулă тыткаланă, Германири тĕрмесенчи фашисла террора хирĕç каланă. Тепĕр касхине Морица вăл ларнă камертах вĕлернĕ. Морица вĕлерни çинчен хаçатра: „Приговăр йышăнна хыççăн, çурçĕр иртсен виçĕ сехетре йна айăпласшăн пулнă çын вĕлернĕ", тесе пĕлтернĕ.

(ТАСС).

ЙУТÇĔРШЫВСЕНЧЕ

◆◆ Йанварĕн 27-мĕшĕнче Лондонра совет посольствинче вечер пулса иртнĕ, вăл вечерта советăн паллă композиторĕ Прокофйев тухса выльаса кăтартнă. Вечерта пулнисем хушшинче Лондонри пĕтĕм дипломатилĕ корпус, Англи министрĕсем, Англири музыкăпа культурăри паллă дейателсем пулнă. Вечер пысăк анăçлăхпа иртнĕ.

◆◆ Венари „Урания" кинотеатрта темиçе кун хушши ĕнтĕ советăн „На северном полюсе" йатлă фильмне кăтартаççĕ. Фильма цензурă касса татса пăсса пĕтернĕ. Çапах та, халăх йна питĕ хĕрулĕн йышăнать.

◆◆ Бразилире Пернамбуко штатĕнчи Казанов районĕнче полиципе сахал çĕрлĕ хресченсем хушшинче çапăçу пулса иртнĕ. Çапăçура 145 çын вилнĕ.

◆◆ Грецире нумай çынсене арĕслеççĕ. Венгрири пичет Грецире пит нумай çынсене, хальхи вăхăтри фашисла режимпа килĕшменнисене, арĕслени çинчен пĕлтерет. Çав арĕссем çĕршывăн хуçалăхĕ пит йапăхса кайнине, массăсем пăшăрханни ÿссе пынине кăтартаççĕ.

◆◆ Франко генералăн черетлĕ „тÿлевĕ". Испанири пăлхавçăсен аллине лекнĕ йалсенче хресченсенчен выльăх-чĕрлĕхĕсене туртса илеççĕ. Пăлхавçăсен влаçĕсем Гипускоа провинцинче (Испанин çурçĕр пайĕ) туртса илнĕ пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхсене пароход çине тийесе, Германине йанă. (ТАСС).

КЕСКЕН

** Йелчĕкри крахмал заводĕнче ĕçлекен И. Антонов йулташ çак çулта „Чăваш Коммунĕ", „Çамрăк большевик", "Пионер сасси" хаçатсене тата „Сунтал", „Ĕçхĕрарăмĕ" журналсене 70 тенкĕлĕх çырăннă. Кану вăхăтĕнче хаçатжурнал вуласа усăллă иртерет. А.

** „Пĕрлешÿ" колхоз çумĕнчи (Вăрнар р.) драмкружок аван ĕçлет. Çĕнĕ çултанпа 5 хут спектакль лартнă. Драмкружок членĕсем çак кунсенче çеç „Радио" колхоза кайса Осипован „Айдар" пйесине выльаса пачĕç.

Н. Игнатйев.

Сĕнтĕрвăрринчи студентсен йĕлтĕр похочĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Йалхуçалăх техникумĕнчи студентсем, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ тата Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнине уйавлана йатпа, йанварĕн 23-мĕшĕнче вăрăм çула похода тухса кайрĕç. Похода кайакан студентсене техникумри студентсемпе преподавателсем Атăл çине хĕрлĕ йалавсемпе анса ăсатса йачĕç, вĕсене хăйсен умне лартнă задачсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме сывлăх сунчĕç.

Йĕлтĕрçĕсен командинче 5 студент, командирĕ А. Ухватов йулташ. Вĕсен маршручĕ çапла: Сĕнтĕрвăрри—Шупашкар—Трак—Вăрнар—Канаш—Çĕрпÿ—Сĕнтĕрвăрри. Йĕлтĕрçĕсен команди хăй чарăнса тăракан вырăнсенче, колхозенче çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслет, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме колхозниксене пулăшать, колхозниксем хушшине массăлă ăнлантарулă ĕçе лайăхлатма пулăшать. Вĕсем çула майăн Вăрнарти зоотехникă тата Çĕрпÿри йалхуçалăх техникумĕнче пулаççĕ. Кусенче вĕсем вĕренÿ ĕçĕпе физкультурă ĕçĕн опычĕсемпе паллашаççĕ.

Командă хăй умне лартнă задачсене пурнăçа кĕртме пултарасси çинчен иккĕленÿ çук. Похода тухса кайаччен ку пысăк ĕçе чылай вăхăт хушши вирлĕн хатĕрленнĕ.

Г. Смирнов.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Шупашкар хулинче електроенергипе усă курас йĕркесемпе правилăсем çинчен

Шупашкар хула Совечĕ 1937 çулхи декабĕрĕн 29-мĕшĕнче йышăннă

ОБЙАЗАТЕЛЬНАЙ ПОСТАНОВЛЕНИ

РСФСР Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1931 çулхи мартăн 30-мĕшĕнче „Обйазательнăй постановленисем кăларасси çинчен" йышăннă постановлени тăрăх, електроенергипе тĕрĕс усă курас тĕлĕшпе Шупашкар Хула Совечĕн Президиумĕ çапла йышăнать:

1. а) уйрăм çынсене тата учреждениссемпе предприйатисене хăйсем тĕлĕн електричествă сутипе усă курма;

б) мĕн чухлĕ лампăпа тата мĕн чухлĕ хăватпа усă курма ирĕк панинчен иртсе ытлашши усă курма—татăклăнах чарас.

Учреждениссенче касхи вăхăтра заньатисем пулакан пÿлĕмсенче çеç електричествă сутипе усă курмала, заньатисем пĕтнĕ хыççăн дежурнăй пÿлĕмсĕр пуçне ытти пÿлĕмсенче пуринче те сутă сÿнтермеле.

2. Електричествăпа ăшăтмали приборсемпе (утюгсемпе, шыв вĕретмелисемпе, каструльсемпе т. ыт. те), вăл приборсене Водосветăн абонент уйрăмĕнче регистрациленĕ хыççăн усă курма йурать.

3. Сутă линине водосвет монтйорĕсем çеç тата абонент çырса панă зайавлени тăрăх дирекци нарйад панă хыççăн çеç кĕртме пултараççĕ.

4. Пур çĕнĕ стройкăсем те електричествă сутипе усă курма водосвета зайавкă тăратса унпа килĕштермеле тата монтаж тума ирĕк илмеле.

5. Водосвет ССР Сойузĕн Халăх Комисарĕсен Совечĕ 1931 çулхи августăн 16-мĕшĕнче електроенергипе усă курнăшĕн тÿлемели сруксем çинчен йышăннă постановлени тăрăх тĕрĕс ĕçлесе пырса, парăмне тÿлемен потребителсене счотчик кăларту илнĕ хыççăн вунă кунран кайран нимĕн асăрхаттарса тăмасăрах кăларса пăрахмала. Електроенергипе усă курнăшăн тÿлесе тăма çакăн пек сруксем тăвас:

а) счотчикĕ пур учреждениссемпе организацисем тата хулара пурăнакансем валли счотчик кăтартăвĕсене илсе расчот кĕнеки çине çырсан пилĕк кунччен;

б) счотчикĕсем çук учреждениссемпе организацисем тата хулара пурăнакансем вальли, електроенергипе усă куракан кашни уйăхăн пилĕкĕмĕш кунĕччен, урăхла каласан, уйăх пĕтиччен 25 кун малтан;

в) вăхăтра тÿлеменшĕн тÿлев пуçланса кайнă кунран тÿлесе татнă куна çиттиччен пĕрлешÿлĕ сектортан 0,05 процент, уйрăм сектортан 0.1 процент пени илмеле.

6. Учреждениссемпе организацисен руководителĕсене електроенергипе тирпейлĕ усă курнине тата расчотсене пăхса пыма ответлă çынсене, вĕсен хушаматне, йатне тата ашшĕ йатне абонент кĕнеки çине çырса уйăрса хума хушас.

7. Моторлă установкăсем пур предприйатисем, çулталăкри вăхăт тăрăх кашни уйăх валли водосвет туса панă графике çирĕп тытса ĕçлесе пымала.

8. Електричествă оборудованилĕ пÿлĕме урăх потребител йышăнсан, пÿлĕме йышăннă потребител, çурт управленине çирĕплеттерсе, пÿлĕме йышăнсан, 3 кунран кайа йулмасăр енергипе усă курасси çинчен зайавлени çырса памала.

Çуртра н тухса кайакан потребител електроенергипе усă курма чарăнас срук çитиччен 7 кун малтан ун çинчен електроенерги паракан предприйатийе çырса пĕлтермеле.

Çÿлте кăтартнă йĕркесене туманшăн електроенерги паракан предприйати çав пÿлĕм çинче тăракан парăма йе çав çуртран куçса кайнă потребителрен йе çав çурта çĕнĕрен йышăннă потребителрен електроенерги паракан предприйатипе условисем çинчен вăхăтра таталмасан, пĕтĕмĕшпех илме пултарать.

9. Електроенерги паракан предприйати, ĕлĕк усă курнă пÿлĕмшĕн парса татман потребителе, ĕлĕкхи парăмне пени мĕнĕпех парса татиччен, вăл потребител хăй йачĕпе енерги илсе тăма килĕшет-и, йе, урăх çын йачĕпе килĕшет-и, пурĕ-пĕрех ток памасан та пултарать.

10. Електроенергипе счотчиксĕр усă куракансене тĕрĕсленĕ чух лампă йе ватт хисепне, ун çинчен електроенерги паракан предприйатийе пĕлтермесĕрех, ÿстернине тупсан, потребител ытлашши вăхăтпа усă курнăшăн иртнĕ хут тĕрĕсленĕ кунран пуçласа çак куна çити виçĕ хак тÿлемеле. Унччёнхи хăвата чакарасси çинчен потребител електроенерги паракан предприйатийе 5 кун малтан пĕлтермеле. Унсăрăн потребител малтан зайавлени панă тăрăхах тÿлесе тăрать.

Çирĕплетнĕ хăвата улăштарассине кашни уйăхăн пĕрремĕш кунĕнче çеç тума йурать.

11. Çак постановленийе пăснăшăн айăплисене административлă йĕркепе укçан 100 тенке çити штраф тÿлетереççĕ, йурийех пăсакансем уголовнă йĕркепе ответ тытаççĕ тата вĕсене електроенерги пама та чарăнаççĕ.

12. Пломбăсăр йе розеткăсăр сĕтел çине лартакан лампăсемшĕн 60 ваттлă лампă шучĕпе тÿлев илеççĕ, патрон çинчи пломбăна йе розеткăна илнĕшĕн ответ тыттараççĕ.

13. Абонемент уйрăмĕнче регистрацилемен електричествăпа ăшăтакан прибор семпе (утюгсемпе, чейниксемпе, шыв ăшăтмалисемпе т. ыт. те) усă курнине тупсан, електричествăпа ăшăтмали прибор хакĕнчен 5 хут ытларах штраф илесçĕ.

14. Çак постановленийе пурнăçланинĕ тĕрĕслесе тăрас ĕçе Водосвет контрольорĕсем тăваççĕ.

Çак постановлени ăна пичетлесе пĕлтернĕ кунран пуçласа ĕçе кĕрет тата вăл икĕ çула пырать.

Хула Совечĕн председателĕ **Каплин.**
Секретарĕ **Кобозова.**

Мелиоторф пĕлтерĕвĕ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулта майăн 27-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх тата Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ 1938 çулхи йанварĕн 8-мĕшĕнче кăларнă приказ тăрăх.

Мелиозем пайĕнчен уйăрса хăй тĕлĕн ĕçлекен **Мелиоторф пайĕ туса хунă. Мелиоторф пайĕ-Мелиорацип торф ĕçĕсене** туса пырать.

Мелиоторф пайĕ пур колхозсене те Мелиоративлă—гидротехнически строителствă ĕçĕсене тутарнăшăн договорсем тăрăх тÿлемели парăма 1938 çулхи февралĕн 15-мĕшĕччен тÿлесе татма ыйтать. Расчот счочĕ № 156/858 Госбанкăн Чăваш республикинчи уйрăмĕнче. Парăмсене тÿлесе татман колхозсем малала Мелиоторф специалисĕсен ĕçĕсемпе усă кураймаççĕ. Пĕрлех, Чăваш АСС Республикĕнчи пур колхозсене те 1938 çулхи строителствă пирки çĕнĕ договорсем тума ыйтать.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи Мелиорацип Торф пайĕ.

ĂСЛĂЛĂХ ПАЙĔ

ÇУТÇАНТАЛĂК ÇИНЧЕН

ЫЙТУ. Мĕншĕн уйăх пĕр вăхăтра çурла йевĕрлĕ, тепĕр вăхăтра çаврашка пулать?

Çĕмĕрле р. Сергейев В., Лизаков В., Майоров М.

ОТВЕТ. Уйăхăн хăйĕн çути çук. Вăл çĕртен 380 пин километрта çĕр тавра çаварăнса çÿрет, хăш чухне çĕр патне кăштах çывхарать, хăш чухне тата кăшт айаккарах кайать. Вăтам шутпа уйăхпа çĕр хушшине 380 пин километр шутлаççĕ. Уйăха та, çĕре те хĕвел хăй çутипе çутатать. Çĕр тавра çавăрăннă чухне уйăхăн хĕвелпе çуталнă йенĕ пĕтĕмпех çĕр йеннеле пулсан, вара епĕр çутă çаврашка куратпăр, уйăхăн çутă йенĕ кăшт анчах çĕр йеннеле пулсан, вăл пире çурла пек курăнать. Уйăх çурла пек чухне унăн хĕвел çути лекмен вырăна çĕр çути ÿкет. Çавăнпа уйăхăн çурла пек çутă пайĕ анчах мар, тата ытти пайĕ те кăшт курăнать. Çĕнĕ уйăх чухне, йе уйăх пĕтес умĕн унăн тĕттĕм йенĕ çĕрĕн хĕвелпе çуталнă йенне хирĕç пулнă пирки, çĕр çинчен уйăх çине çутă нумайрах лекет. Çавăнпа куй пек чухне епĕр лайăх пăхсан, уйăхăн тĕттĕм пайне те курма пултаратпăр.

ЫЙТУ. Пĕлĕт çинче хуркайăк çулĕ пур, теççĕ. Мĕн-ши вăл?

ОТВЕТ. Хур-кайăк çулĕ çĕрле уйар пулсан питĕ лайăх курăнать. Çак хур-кайăк çулĕ çинеле телескоп витĕр пăхсан, епĕр нимле шурă çутă та курмастпăр. Ун вырăнне темĕн чухлĕ питĕ пĕчĕк çутă пăнчăсем куратпăр. Çапла хур-кайăк çулĕ питĕ инçетре тăракан çăлтăрсен ушкăнĕ пулать. Етем куçĕн кашни çăлтăрăн çутине ăрасна уйăрса илме вăй çитмест, анчах куç пур çăлтăрсен çутине пĕрлештерсе шурă пĕлĕт йевĕрлĕ йапала курма пултарать. Хур-кайăк çулĕ горизонтăн пĕр йенчен пуçланса тепĕр йенне çитиччĕнех тăсăлать. Çăлтăрсен карти çине пăхсан епĕр вăл çĕрĕн тепĕр полушаринче те курăннине пĕлетпĕр. Çапла пирĕн патăрта хур-кайăк çулĕн пĕр пайĕ анчах курăнать. Çакăнтан хур-кайăк çулĕ пĕтĕм пĕлĕте йĕри-тавра ункăлă хупласа илнине куратпăр.

Хур-кайăк çулĕ тăçта инçетри çăлтăрсен çутисем пĕрлештерсе çутатнинчен пулнă терĕмĕр. Çак ушкăнри çăлтăрсен хисепĕ мĕлйардран та иртет. Ахаль куçпа курăнакан çăлтăрсем, тата пире çутатакан хĕвел те çак хур-кайăк çулĕн çăлтăрсен ушкăнне кĕрет. Хуркайăк çулĕн çăлтăрсен ушкăнне пĕрле „галактикă" теççĕ. Ку галактикăна пирĕн хĕвел те кĕрет терĕмĕр. Хĕвел вăл ытти çăлтăрсем пек йапала. Анчах вăл пиртен ытла инçетре тăман пирки пире пысăк курăнать, вăл çывăхра пирки çĕр çинчи чĕрлĕхсене, ÿсентăрансене çителĕклĕ ăшă, çутă парать. Чи çывăх çăлтăрсенчен пирĕн пата çутă 4 çулта тин çитет, хĕвелрен çутă 8 минутра çитет. Çакăнтан епĕр çăлтăрсем хĕвелрен те тата темиçе пин хут инçетрех тăнине пĕлме пултаратпăр. Хур-кайăк çулĕн чи-айакри çăлтăрсенчен çутă темиçе вунă пин çултан тин çитме пултарать. Çапла вĕсем çывăхри çăлтăрсенчен татах та инçетре тăраççĕ.

* * *

ЫЙТУ. Епĕр пурăнакан çĕрсĕр пуçне, тата ытти планетăсем çинче тĕрлĕ чĕрчунсем пур-и?

Ишлей р. Никитин, Порфирйев, Михайлов.

ОТВЕТ.

Тĕрлĕ ÿсен-тăрансене, чĕрлĕхсене пурăнма, çитĕнме тĕрлĕ условисем кирлĕ. Вĕсене пурăнма сывлăш, çителĕклĕ ăшă, çутă, шыв тата ытти йапалăшсем кирлĕ. Ăслăлăх тĕрлĕ планетăсем çинче чĕр йапаласене çитĕнмели условисем пурри çуккине пĕлме тăрăшать. Хальхи вăхăтра планетăсене пур йенчен те чылай тĕплĕн вĕренсе çитнĕ. Çапла халĕ Марс планетă çинче чĕрлĕхсене, ÿсентăрансене пурăнмали условисем пур тесе шухăшлаççĕ. Лоуель йатлă астроном Марс çинчен питĕ тĕплĕ пĕлекенскер пулнă, вăл Марс çинче ÿсентăрансем те çитĕнеççĕ, чĕрлĕхсем те пурăнаççĕ, тенĕ. Лоуель мĕншĕн çапла калама пултарнă? Мĕншĕн тесен вăл Марс çинче хлорофил текен йапалаш пулнине спектральнă анализ текен майпа пĕлнĕ. Хлорофил вăл ÿсентăрансен симĕс пайĕсенче пулакан йапалаш, çавăнпа хлорофил пурри ÿсентăрансем пурри çинчен пĕлтерет.

Ÿсентăрансем пулсан чĕрлĕхсем те пулмала. Ÿсентăрансене çитĕнме чĕрлĕхсем те кирлĕ. Ÿсентăрансем çитĕннĕ чухне сывлăшран кăмрăк йÿçеклĕ газа илсе усă кураççĕ. Чĕрлĕхсем ÿсентăрансене çисе пурăнаççĕ, сывлана чухне вĕсем сывлăша кăмрăк йÿçеклĕ газ кăларса пурăнаççĕ. Çакăн пирки ÿсентăрансем чĕрлĕхсемсĕр, чĕрлĕхсем те ÿсентăрансемсĕр çитĕнме пултараймаççĕ. Çавăнпа Лоуель Марс çинче ÿсентăрансем те, чĕрлĕхсем те пур тесе шухăшланă. Ытти планетăсенчен Венерă çинче чĕрĕ йапаласем пулĕ тесе кĕтме пулать. Анчах ку таринчен те Венерă çинче чĕрĕ йапаласем çитĕнме кирлĕ условисем пĕтĕмпех пурри çинчен пĕлсе çитеймен. Çавăнпа Венерă çинче те чĕрĕ йапаласем пур тесе татсах калама пултараймастпăр.

Кунта акă çапла шухăшламала. Хĕвел тавра пысăк 9 планетă çаварăнса çÿрет. Вĕсенчен пĕри епĕр пурăнакан çĕр пулать. Çак епĕр пурăнакан çĕр çинче ÿсентăрансем, тĕрлĕ чĕрлĕхсем пурăнаççĕ пулсан, ытти планетăсем çинче вĕсем мĕншĕн пулас çук? Вĕсенче те çĕр çинчи пекех чĕрĕ йапаласем пулмала, тесе кĕтмеле.

Астрономи ăслăлăхĕ пĕрмай çитĕнсе пырать. Пуринчен ытла вăл пирĕн Сойузра ытти ăслăлăхсем пекех питĕ вăйланса пырать. Çавăнпа вăл малашне çак пирĕн ыйтăва та тата тĕплĕрех пĕлсе татăклă ответ парассине лайăхах шанма пултаратпăр.

Ф. Кузьмин.

Госбанк пĕлтерĕвĕ

Государствă банкĕн Чăваш республикинчи Кантурĕ СТО-н 1932-мĕш çулхи йанварĕн 21-мĕшĕнче кăларнă постановленийĕ тăрăх çакна пĕлтерет: Чăваш Сăкатри йалпона Государствă банкĕ тÿлеме пултарайман организацисен списăкне кĕртет.

Асăннă йалпона таварсем парса-илессипе тата ытти йенпе те çыхăнса тăракансене çакна пĕлсе тăма пĕлтерет.

Государствă банкĕн Чăваш Республикĕнчи Кантурĕ.

Ачасен театрĕ (Т Ю З)

Хватер шырать йе çурт сутăн илет. Хак килĕшÿ тăрăх.

Çак адреспе пĕлтермеле: Карл Маркс урамĕ, Пионерсен çурчĕ. ТЮЗ

Кăçалхи йанварĕн 31-мĕшĕнче касхине Пихтулински вăрман дачинче, Хĕрлĕ тунката патĕнчи вăрман хурал çуртĕнчен

ЛАША ÇУХАЛНĂ

тĕсĕ сутă-çÿрен, çамки çинче шурă, йĕнерчĕк вырăнче шурă, çилхи сылтăм йенеле.

Тупăнсан çак адреспе пĕлтермеле: Вăрманкас Лапсар, Шупашкар районĕ Крупскайа йачĕпе тăракан колхоз.

Академи театрĕнче
Февралĕн 3-мĕшĕнче
Вырăсла спектакль
Шиллер
„Коварство и любовь"
(4 пайлă, прологлă)
Аслă режиссор Г. В. Странский лартать
Художник Йе. Н. Сапожников.
Талон № 99. Абонемент № 9, талон № 8.
Дирекци

СЫСНА ТИРĔ—тир-сăран промышленнăçне вальли ХАКЛА СЫРИО

Сысна тирне государствă хатĕрлев организацийĕсем кăтартса панă хакпа йалпона йе Сойуззаготкожа парăр.

Тир панăшăн çавăнтах сăран таварсем илме пултаратăр.

Сакун сысна тирсене ĕнтме чарать.

„Чăваш коммунĕ" çырăнса илмелли хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха —7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита [illegible], Гор. Чебоксары, Типография [illegible]. Заказ [illegible], Тираж [illegible].